...Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 4 ЕРНЕКУН
51 (4864)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместительĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Троцкисла-бухаринла бандитсене каçару çук

„Сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн пайан ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ умне тăрать. Судпа айăпланакансен тенкелне троцкисла-бухаринла шпионсен, çын вĕлерекенсен, сăтăрçăсемпе диверсантсен айăплă ĕç тунă çĕртех йарса тытнă банди йышăнать.

Çак тискерсем, етем сăн-питне пачах çухатнăскерсем, йавăртан та йавăр преступленисем туса айăпа кĕнĕ, вăл преступленисене шутласа тухнипех чĕре чĕтресе кайать тата тымарсенче йун сивĕнет. Ирсĕр бандитсем—Бухарин, Рыков, Йагода тата вĕсен тарçисем—хăйсем тунă тĕлĕнмеле усал ĕçсемшĕн ответ памала, çав усал ĕçсем умĕнче етем йатне йаракан халиччен паллă пулнă тĕслĕхсем те пĕчĕкленсе йулаççĕ.

Совета хирĕç ирсĕр вăрттăн ĕçре троцкиссемпе бухаринцăсем, ес-ерсемпе меньшевиксем, буржуаллă националиссем тата ытти тĕрлĕрен йăх-йах пĕр йĕрĕнчĕклĕ çăмхана çыхланса кайнă. Социалисăма хирĕç етемле мар тискеррĕн тарăхни пĕрлештерсе тăнă çак тепренчĕксене. Ĕççыннисен хаваслă та телейлĕ пурнăçĕ, пирĕн социалисăмла çĕнтерӳсен сăнсăпачĕ вĕсене уртарса йанă. Ленин—Сталин партийĕ, рабочи клас, совет халăхĕ уçă çапăçусенче çĕмĕрсе тăкнă ирсĕр предателсемпе изменниксем вилĕ шăрши çапнă троцкисла вăрттăн ĕçре хăйсен наркăмăшлă хĕçпăшалне хатĕрленĕ. Актор пек маскăланса, хăйсен тискер-кайăкла сăн-питне пытарса, вĕсем хăйсен ирсĕр тĕллевне пурнăçа кĕртесшĕн пулнă—шпионажпа, сăтăрланипе, диверçипе, тискеррĕн вĕлернисемпе,—ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталисăм туса хурасшăн пулнă.

Пирĕн çĕршывра çĕнĕрен капиталисăмла катăргă туса хурасси, рабочисемпе хресченсене çĕрулпучĕсемпе капиталиссен пусмăрне чиксе лартасси, пирĕн тăван çĕршыва татăкăн-татăкăн вакласа ăна фашисла вăрăхурахсен аллине парасси, ĕççынни массисене фашисла террор тискерлĕхне чиксесси—çавăн пек пулнă троцкисла-бухаринла çĕлен - калтасен ирсĕр тĕллевĕ. Пӳтсĕрсен мĕскĕн те хăравçă ушканĕ хăй пачах нимĕн тăшне те тăманнине курмасăр тăма пултарайман. Следстви çакна тупса палăртнă: вĕсем хăйсен мĕн пур шанчăкĕсене „йутçĕршыв агрессăрĕсем хĕçпăшаллă вăйпа пулăшасси çине" хунă, вăл агрессорсем çав пулăшува заговорщиксене ССР Союзне татăкăн вакласа тата Украинăна, Белоруççине, Вăтам Азири республикăсене, Грузине, Армение, Азербайджана, Приморйене ССР Союзĕнчен татса илес условисем тăрăх пама пулса сăмах панă".

Ылханлă пӳтсĕрсем пирĕн тăван çĕршыв-аннепе, пирĕн таса çĕрпе курттăмăн та ваккăн та суту-илӳ тунă, вăл çĕрĕн ирĕклĕхĕшĕн халăхăн чи лайăх ывăлĕсем хăйсен йунне йухтарнă. Троцкисла-бухаринла бандитсем капиталиссемпе çĕрулпучĕсене таварса килесшĕн пулнă, пирĕн çĕршыва империалиссен колонийĕ туса хурасшăн, пирĕн халăха — капитал чурисем туса хурасшăн пулнă. Ирсĕр изменниксем совет государствин вăрттăнлăхĕсене йутçĕршыв разведкисене сутса тăнă, ССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕпе суту-илӳ тунă, рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин никама пăхăнманлăхĕпе тата никам пырса тĕкĕнменлĕхĕпе суту-илӳ тунă.

Следстви татăклăнах çакна тупса палăртнă: „сылтăмла-троцкисла блокри" шпионсемпе диверсантсем, террориссемпе сăтăрçăсем Троцкий, Бухарин, Рыков панă заданисем тăрăх тата уйрăм йутçĕршыв государствисен генералнăй штабĕсенче пысăккăн шухăшласа хатĕрленĕ плансем тăрăх ĕçлесе пынă.

Вăрçă чĕртекенсен фашисла генштабĕсемпе полици охранкисенче урса кайсах пĕтĕм тĕнчене йун ăшне тума кунĕн-çĕрĕн хатĕрленеççĕ,—çавăнта илсе пыраççĕ тĕлĕнмеле ирсĕр троцкисла-бухаринла заговăрăн пĕтĕм йĕрĕсем. Троцкишĕн, Бухариншăн, Рыковшăн тата ытти ирсĕр усалсемшĕн буржуалă охранкăсене илсе пыракан çул çĕнĕ мар: ăна вĕсем тахçанах пĕлнĕ. Халĕ ĕнтĕ çакна пĕтĕмпех палăртнă: Троцкий 1921 çултанпа пĕр йутçĕршыв разведкин тата 1926 çултанпа тепĕр йутçĕршыв разведкин шпионĕ пулса тăрать. Айăпланакансенчен хăшпĕрисем патша охранкин агенчĕсем тата провокаторĕсем пулнă.

Азефăн çав тахçанхи соратникĕсем истори пĕлекен пур хура изменăсене те таçтах кайа хăварнă. Вĕсем фашисла охранкăн хушувĕсем тăрăх ĕçлесе, пирĕн тăван çĕршыва пайтах сийен тунă. Вĕсене тупса тытни — пур çĕршывсенчи фашисăмăн вăйĕсене те пысаккăн çĕнтерни пулса тăрать. Мухтавлă совет разведки, халиччен илтмен предателствăсен тĕввине сӳтсе, пĕтĕм малта пыракан етемлĕхшĕн калама çук ырă ĕç турĕ. Кулҍтурă интересĕсене хакла хуракансем пурте, фашисла пусмăра ылханса тарăхакансем пурте, Герникăпа Алҍмерийăра вĕлернĕ хӳтлĕхсĕр пулнă çынсен йунне астăвакансем пурте, Испанипе Китайăн хăйсен пурнăçне фашисла çĕмревçĕсенчен сыхлакан геройла халăхсене кăмăллакансем пурте,—вĕсем пурте фашисăмăн чи ирсĕр те усал çыннисен çав çĕлен йăвине тăрă шыв çине кăларнине саламлареç.

Заговăра хăвхалантарса йертсе пынă — Троцкий, Бухарин, Рыков—изменăсемпе предателствăсен вăрăм çулне утса тухнă. Троцкисăм хăй пуçланнăранпах буржуалă агентурăн чи йĕрĕнчĕклĕ тĕрлĕлĕхĕ пулнă, вăл рабочисен йухамне социалисăма ĕненменнин наркăмăшĕпе минкретме тăрăшнă. Бухаринпа Рыков хăйсем политикăла ĕçе хутшăннă кунранпах буржуазин клас хушшинчи лазутчикĕсем, кулаксен интересĕсемшĕн тăракансем пулнă. Çирĕм çул кайарах, çамрăк Совет республикĕ вилĕмле хăрушлăх умĕнче тăнă чухне, çав изменниксем заговор организациленĕ, вĕсен заговорĕ Совет влаçне сирпĕтсе антарас тĕллев, Ленина, Сталина, Свердлова вĕлерес тĕллев тытнă. Троцкиссемпе бухаринцăсен ун хыççăнхи пĕтĕм ĕçĕсем совет халăхне хирĕç туса пынă чи ирсĕр преступленисен пĕр сăнчăрĕх пулса тăраççĕ.

Совет халăхĕ çав ирсĕр усалсене ĕмĕрлĕхе ылханса тарăхать, вĕсен йĕрĕнчĕклĕ ĕçĕсене ĕмĕрлĕхе питлет. Вĕсем коммунисăмшăн кĕрешнĕ кристал пек таса çынăн, халăхăн çуламлă трибунĕн—С. М. Кировăн йунне йухтарнă. Вĕсем пирĕн халăхăн генийĕн—А.М. Горькин пурнăçне татнă,—вăл вилни пирĕн совет çĕршывĕшĕн В. И. Ленин вилнĕ хыççăн чи йавăр çухату пулчĕ. Вĕсем хурçă пек çирĕп болшевиксене, ĕççыннисен ĕçĕшĕн хăватлă паттăрлăхпа кĕрешнĕ борецсене—В. В. Куйбышева тата В. Р. Менжинские вĕлерессине организациленĕ. Троцкисла бухаринла заговорщиксен сăтăрçăла, диверçиле ĕçĕсене пула нумай-нумай çынсен пурнăçĕсем пĕтрĕç.

Усал ĕçсем туса пынăскерсен çавсемшĕн пуриншĕн те ответ тытмала. Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтереççĕ. Çапла каланă пирĕн тапхăрти чи аслă гуманис, усал заговорщиксем вĕлĕрнĕ А. М. Горький. Унăн сăмахĕсем халăхăн калама çук пысăк ăс-тăнне, пур тӳрĕ çынсен кăмăлĕсемпе шухăшĕсене палăртса тăраççĕ. Ирсĕр кайашсене ылханни мĕлйун-мĕлйун çынсен чĕринче тăвăл пек кĕрлет. Тоцкисла бухаринла кайашсем вĕт ĕççыннисем калама çук пысăк парнесем кӳрсе тата пысăк вăйхăват хурса кĕрешсе илнине пурне те сутнă. Çав ирсĕр усалсем пирĕн пурнăçа çеç мар, пуласăрусен пурнăçне те сутнă.

Ирсĕррисенчен те чи ирсĕрри—Иуда-Троцкий--фашисăмăн сăнчăрти йытти, тахçанхи шпион тата провокатор Гессăн тата Франкон тивĕçлĕ союзникĕ, унăн аллисем чавсисем таранах чи лайăх та ыра çынсен йунĕпе хĕрелнĕскер, буржуалă стройăн хӳттинче, хăйĕн фашисла хуçисен хӳттинче халăх правосудийĕнчен пытанса пурăнать. Анчах истори тахçанах ĕнтĕ ун çинчен—Иуда-Троцкий çинчен—хăйĕн приговорне каланă. Унăн йатне—чи ирсĕр усаллăха пĕлтерекен йата—ĕмĕрлехе ылханнă.

„Сылтăмла—троскисла блокри" усалсене суд туни—пĕтĕм совет халăхĕн сучĕ пулать. Совет правосудийĕ, халăхăн ирĕкне пурнăçа кĕртсе, йунлă преступленисен пĕтĕм сыххине вĕçне çитийех сӳтĕ, усал предателсене мĕн тивĕçлине парĕ. Çав ирсĕр усалсем валҍли пирĕн калама çук ырă çĕр çинче вырăн çук.

(„Правда" умстатйи, мартăн 2-мĕшĕ, 1938 çул).

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ

Мартăн 2-мĕшĕнчи ирхи лару

Мартăн 2-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре, Мускавра, Союзсен Çурчĕн Октабĕр залĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Суд Çар Коллегийĕ судăн уçă ларувĕнче Бухарин, Рыков, Йагода, Крестинский, Раковский, Розенголц, Иванов, Чернов, Гринко, Зеленский, Бессонов, Икрамов, Ходжайев, Шарангович, Зубарев, Буланов, Левин, Плетнев, Казаков, Максимов—Диковский, Крючков ĕçĕсене пăхма пуçларĕ. Вĕсем тăван çĕршыва пăрахса ташмана сутăннă ĕç, шпионаж, диверçи, террор, сăтăр, ССР Союзĕн çар хăватне хавшатас, йутçĕршыв государствисене Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăнма провокаци тăвас тата ССР Союзĕнчи халхи социалисăмла обществăлă тата государствăлă стройа сирпĕтсе антарас тата капиталисăма кайала таварас. Буржуази влаçне кайала таварас задачă лартнă ĕçпе урăхла каласан—РСФСР Уголовнăй Кодексăн 58—1—а, 58—2, 58—7, 58—8, 58—9, 58—11 статйисемпе айăпланаççĕ. Айăпланакан Иванов, Зеленский, Зубарев çӳлте асăннă статйасемсĕр пуçне тата РСФСР Уголовнăй Кодексин 58—13 статйипе айăпланаççĕ.

Суд составĕ: Председател—ССР Союзĕн Верховнăй Суд Çар Коллегийĕн Председателĕ армвоенйурист В. В. Улрих, Суд членĕсем—Çар Коллегийĕн председателĕн заместителĕ—корвоенйурист И. О. Матулевич, диввоенйурист Б. И. Иевлев тата судăн запаслă членĕ—бригвоенйурист И. М. Зырйанов.

Айăпланакане ССР Союзĕн прокурорĕ А. Й. Вышинский. Председател Улрих йулташ суд ларăвне уçнă хыççăн айăпланакансенчен вĕсем обвинителнăй заключенине илнĕ-и тесе ыйтса пĕлет. Айăпланакансем пурте илнĕ тесе ответлеççĕ. Унтан Улрих йулташ çапла пĕлтерет: айăпланакан Левин ыйтнă тăрăх, ун хутне кĕме Мускаври защитниксен коллеги членне Й. Д. Брауде защитнике ирĕк панă, айăпланакан Плетневпа Казакова, вĕсем хăйсем ыйтнипе вĕсен хутне кĕме Мускаври защитниксен коллеги членне Н. В. Коммодов защитнике ирĕк панă, ытти айăпланакансем: Бухарин, Рыков, Йагода, Крестинский, Раковский, Розенголц, Иванов, Чернов, Гринко, Зеленский, Бессонов, Икрамов, Ходжайев, Шарангович, Зубарев, Буланов, Максимов—Диковский, Крючков защитниксене йышăнман. Улрих йулташ айăпланакансенчен пуринчен те: есĕр хăвăрăн решенине улăштармани, защитниксем кирлĕ мар-и сире?—тесе ыйтать. Айăпланакансем хăйсене защитниксем кирлĕ марри çинчен калаççĕ.

Председател Улрих йулташ защитниксемсĕр айăпланаксене вĕсем, хăйсен йулашки сăмахĕсемсĕр пуçне, хăйсене хӳтлесе сăмах калама пултарни çинчен ăнлантарса парать. Малала Улрих йулташ, пур айăпланакансем те пĕр-пĕрне ыйтусем пама пултарни çинчен, суд следствин уйрăм ыйтувĕсем тăрăх ăнлантарса пама пултарни çинчен каласа парать.

Суд секретарĕ—пĕрремĕш рангри военйурист А. А. Батнер обвинителнăй заключенине вуласа пана хыççăн, председател Улрих йулташ кашни айăпланакантан уйрăм вăл хăйне çак ĕçпе айăплă тесе шутлать-и,—тесе ыйтать. Айăпланакансем пурте, айăпланакан Крестинскисĕр пуçне, хăйсен айăпĕсене йăлтах йышăнна.

Перерыв тунă хыççăн суд айăпланакансенчен ыйтма пуçлать. Чи малтан айăпланакан Бессоновран ыйтаççĕ.

Айăпланакан Бессоновран ыйтса пĕтернĕ хыççăн судăн ирхи ларувĕ хупăнать.

* * *

Октабĕр залĕнче, совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ пынă çĕрте, столицăри заводсемпе фабриксенчи рабочисем, совет общественнăçĕн представителĕсем, Хĕрлĕ Çар представителĕсем пынă. Кунсăр пуçне Совет Союзĕнчи тата йутçĕршывсенчи хаçатсен корреспонденчĕсем нумай пынă. Судра Дипломати корпус членĕсем пур. (ТАСС).

Вилĕм вĕсене, ирсĕрсене

Шупашкарти тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе инженерла техникла работниксем тата служащисем февралĕн 28-мĕшĕнче ССРС Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем „Сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн ĕçĕ пирки следстви туса пĕтерни çинчен пĕлсенех, митинг туса ирттерчĕç.

ССР Союзне капиталиссене, помещиксене сутма, рабочисемпе хресченсене йун айне хума ăмсанакан тăшмансене—Бухарина, Рыкова, Йагодана, Крестинскине тата çавăн пек ытти ирсĕрсене заводри рабочисем пĕтĕм чĕререн ылханаççĕ.

Митинг пĕр сасăпах çакĕн пек резолуци йышăнчĕ:

„Епĕр Шупашкарти тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе служащисем ССР Союзĕн прокуратури тискер тăшмансене суд аллине пани çинчен итленĕ хыççăн, хамăрăн чаплă разведкăна, хамăрăн çирĕп сталинла наркома Н. И. Йежов йулташа пысăк кăмăлпа саламлатпăр.

Епĕр халăх тăшманĕсене çĕр çинчен шăлса пăрахма ыйтатпăр. Епĕр ССР Союзĕн Верховнăй Судĕн Çар Коллегинчен тăшмансене, пирĕн тăван çĕршыва сутма ăмсанакансене персе пăрахма ыйтатпăр.

Епĕр тăшмансене хамăрăн Совет çĕрĕ çинче пурăнма памăпăр. Епĕр тата та таччăнрах хамăрăн тăван аслă коммуниссен партийĕ тавра, Ленинла Тĕпком тавра, аслă Сталин тавра пĕтĕçетпĕр. Болшевикла сыхăлăха тата та çӳлерех çĕклетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн совет разведки тата ăна йертсе пыракан Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Н. И. Йежов йулташ!

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пултăр йуратнă çулпуç Сталин йулташ!"

Персе пăрахма ыйтатпăр!

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 28-мĕш. Комбинатри рабочисем, ССР Союзĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем „Сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн ĕçĕ пирки следстви туса пĕтерни çинчен ССРС Прокуратури пĕлтернине радиопа илтсенех, цехсенче митингсем туса ирттерчĕç. Митингсенче пĕтĕмпе 600 çын ытла пулнă.

Столярнăй цехри митингра Савов йулташ çапла каларĕ:

— Тăван çĕршыва фашиссене сутакансем валли Совет çĕршывĕнче вырăн çук! Епĕр Аслă судран çак фашисла бандăсем, йытушкăнĕсем пирки тивĕçлĕ приговор йышăнма ыйтатпăр.

Сывă пулччăр мухтавлă Йежов йулташ йертсе пынипе ĕçлекен чекиссем, Совет разведки!

Сывă пултăр аслă Сталин!

Кашни цехрах йышăннă резолуцисенче комбинатри рабочисем фашисла бандитсене персе пăрахма ыйтаççĕ.

Чи пысăк наказани памала!

Февралĕн 28-мĕшĕнче, ССР Союзĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем „Сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн ĕçĕ пирки следстви туса пĕтернине пĕлсен, Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ ертелĕнчи рабочисемпе работницăсем митинг туса ирттерчĕç.

Митингра правлени председателĕн заместителĕ Иванова йулташ „Сылтăмла-троцкисла блок" текен ушкăнăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Иванова сăмахĕ хыççăн рабочисемпе работницăсем пурте пĕр сасăпа: „Епĕр тăван çĕршыва сутакансене хамăрăн ирĕклĕ те савăнăçлă çĕршывра капиталисăм йĕрки тума вихăçан та ирĕк памастпăр. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсене çав ирсĕр тăшмансене тăрă шыв çине кăларнăшăн чĕререн савăнса тав тăватпăр. Вăл тăшмансен диверçилĕ ĕçĕсене хирĕç епĕр хамăрăн политикăла сыхăлăха тата ытларах ӳстерме, хамăрăн плана ирттерсе тултарма пулатпăр.

ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегинчен пире ирĕклĕ, савăнăçлă пурнăç туса парассишĕн нумай çулсем хушши кĕрешнĕ аслă çулпуççене Ленин, Сталин, Свердлов йулташсене вĕлерме тăнă йутçĕршыв разведкин йыттисене—Бухарина, Рыкова, Йагодана, „Сылтăмла-троцкисла блокра" пулнă тăшмансене чи пысăк наказани пама ыйтатпăр", тесе йышăнчĕç.

Çĕленкалтасемшĕн пирĕн çĕр çинче вырăн çук

Епĕр, Чăвашсен Йуридический шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, „сылтăмла - троцкисла блок" йатлă заговорла ушкăн пирки айăпласа çырнине радио тăрăх итленĕ хыççăн, кĕске митинг туса ирттертĕмĕр.

Митингра коммунис Кузьмин йулташ çав ушкăнăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн тухса калаçрĕç.

—„Сылтăмла - троцкисла блок" йатлă заговорла ушкăна,—тет Фахрутдинов йулташ,—пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе хумала пирĕн тăван çĕршыва пайласа йутçĕршывсене сутма шутланă çĕлен калтасене—Бухарина, Рыкова, Йагодана т. ыт. те пĕр шеллемесĕр персе пăрахмала. Йытта—йытă вилĕмĕ! Вĕсем тискер тăшман—Троцкий йертсе пынипе пирĕн хаклă, йуратнă Куйбышев Менжинский, Горький, Киров йулташсене тискеррĕн вĕлернĕ.

—Епĕр Чăвашсен Йуридический шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем Верховнăй Судăн Çар Коллегинчен Бухарина, Рыкова, Йагодана т. ыт. те пĕр хĕрхенмесĕр персе пăрахмала тума ыйтатпăр,—терĕ митинг.

Сыхăлăха татах та вăйлатар!

Шупашкарти—колхоз работникĕсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен шкулта вĕренекенсем „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă бандăн ирсĕр ĕçĕсем тăрăх айăпласа çырнине пĕлсен, пуху туса ирттерчĕç.

Пуху 250 çын йачĕпе „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă заговорла ушкăна—Бухарина, Рыкова, Йагодана тата ыттисене те пурне те персе пăрахма ыйтать. Çын вĕлерен йытăсене—йытă вилĕмĕ! Тăшмансем пĕлсе тăччăр.

Персе пăрахма ыйтаççĕ

Патăрйелĕнчи педучилищăра вĕренекенсемпе вĕрентекенсем „сылтăмла-троцкисла блок" йатлă заговорла ушкăн ĕçĕ тăрăх айăпласа çырнине пĕлнĕ хыççăн, мартăн 2-мĕшĕнче митинг туса ирттерчĕç.

Митингра 490 çын пулчĕ.

Бухарин, Троцкий ушкăнĕсем есерсемпе пĕрле Ленина хирĕç заговор организациленĕ, Ленин, Сталин, Свердлов йулташсене вĕлерме шутланă, троцкиссенчен, бухаринцăсенчен, сулахай есерсенчен правителствă тума хăтланнă, револуцин çуламлă трибунне С. М. Киров йулташа вĕлернĕ, Куйбышев, Менжинский, Горький йулташсене вĕлерме пулăшнă.

Митинг çакăн пек ирсĕр ĕçсем тăвакан халăх тăшманĕсене пурне те персе пăрахма ыйтать.

Рахмуллин.

Совета хирĕçле „Сылтăмла-троцкисла блок" айăпланакансен [illegible] 2—3-мĕш страницăсенче.

Аслă шкулсенче йутçĕршыв чĕлхисене вĕрентессине вăйлатаççĕ

Аслă шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри комитечĕ йутçĕршыв чĕлхисене йатарласа вĕрентмен аслă шкулсенче вăл чĕлхесене вĕрентес пахалăха хăпартас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме йышăннă.

1938-39 вĕренӳ çулĕнчен çав аслă шкулсенче йутçĕршыв чĕлхисене вĕрентме 250—300 сехетрен кайа мар уйăраççĕ. Кунсăр пуçне тăватăмĕшпе пиллĕкĕмĕш курссенчи студентсене факултативлă занати—специалнăç тăрăх йутçĕршыв литературине вулама тата куçарма 50 сехет параççĕ.

Аслă курса куçарнă чухне йутçĕршыв чĕлхи тăрăх екзамен парасси хал мĕн пур аслă шкулсемшĕн обйазателнă пулать.

(ТАСС).

Çĕрмамăк тăвакан районсенчи уй-хир ĕçĕсем

Хирсене çуркунне шăварни

Вăтам-Азири республикăсемпе Кавказ леш йенĕнчи пиншер колхозсем хирсенче çурхи суха тăваççĕ. Туркменире 100 пин гектар ытла сухаласа пăрахнă, вăл пĕтĕм сухаламали планăн 66 проценчĕ пулать. Уй-хир ĕçĕсем Таджикистанра та хĕрсех пыраççĕ. Çĕрмамăк акса тăвакан районсенче 223 пин гектар (çурхи сухан 15 проценчĕ) сухаланă. 1937 çулхипе танлаштарсан Вăтам Азири республикăсенче уй-хир ĕçĕсем кăçал чылай ирттерех пуçланнă.

Çĕрмамăк акса тăвакан хуçалăхсем кăçал февралĕн 20-мĕш тĕлне пуйĕ мĕн чухлĕ сухаланине илсе пăхсан, вăл пĕлтĕр çав числа тĕлнех сухаланинчен 85 пин гектар ытларах пулать.

Узбекистанра, Туркменире тата Татжикистанра çĕрмамăк плантацисемпе хирĕсене çуркуне шăварасси сăрăлса кайнă. Узбекистанра 232 пин гектар çĕр лаптăкне шăварнă. Азербайджанпа Дагестанра çуракине ир тумали йĕркепе шăвараççĕ.

Азербайджанра тĕштырă кулturисене массăлăн акас ĕç пырать. Çуркунне акмали кулturăсемпе пирвайхи пин гектарсене акнă та ĕнтĕ. Джебриал районĕнчи колхозсем çуракине туса пĕтернĕ те ĕнтĕ.

(ТАСС).

Йапонине хирĕç бойкот тăвассишĕн

НЙИУ-ЙОРК февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри паллă деятелсем—профессорсем, писателсем тата урăхисем те пурĕ çĕр çын манифест çырса кăларнă. Вĕсем унта Америкăра пурăнакан халăхсене Китайра Йапони агреçине чăрмантарас шутпа Йапони таварĕсене хирĕç бойкот тума чĕнсе çырнă.

Манифест çырса кăларакансем хушшинче сенатор Поррис, ĕлĕк Америкăн Германири посолĕ пулнă Додд тата конгресăн темиçе членĕ.

(ТАСС).

Йапони çарĕ тунă çухатусем

Шанчăклă пĕлтерӳсем тăрăх çакна палăртнă: 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне Йапони çарĕ Китайра çакăн чухлĕ çухатусем тунă.

Тип çĕр çинчи çар йенĕпе: 42.232 çын вилнĕ, 142.150 çын аманнă, 8.510 çын нимсас-чӳсĕр çухалнă.

Авиаци йенĕпе: тип çĕр çинчи тата тинĕс çинчи çар самалочĕсем пурĕ 387 пĕтнĕ, пилотсем 376 çын вилнĕ. Ним сас-чӳсĕр 87 пилот çухалнă тата 109 пилот аманнă.

Тинĕс вăйĕсен йенĕпе: 3.240 çын вилнĕ 460 çын ним сас-чӳсĕр çухалнă. Тăватă крейсер вăйлăнах çĕмĕрĕлнĕ. Кунсăр пуçне китайцăсем Йапонин тăватă канонеркине çĕмĕрнĕ, тăватă транспăрт çуран çар баталйонĕпе шыва путарнă.

Çапла вара, вăрçăн пиллĕк уйăх çура вăхăт хушшинче Йапони çарĕнче 198.172 çын стройран тухнă.

(ТАСС).

Каталони çине 229 хутчен бомбăсем пăрахнă

Испанири пăлхавçăсен çар авиацийĕ Каталонири районсем çине бомбăсем пăрахни çинчен Еспан агентстви статистикăлă цифрăсем илсе кăтартать. Февралĕн 5-мĕш тĕлне Каталони çине тинĕс çинчен снарйадсемпе персе 17 хут тапăннă, сывлăшран 212 хут бомбăсем пăрахнă. Фашисла самолотсем çинчен 5 024 бомбă пăрахнă, карапсем çинчи тупăсенчен—398 снарйад. Çапла бомбăсем пăрахнипе пула 1.542 çын вилнĕ, 1.979 çын аманнă. Бомбăсем пăрахнипе 260 çурт йăлтах ишĕлсе пĕтнĕ, 1495 çурт кăшт çĕмĕрĕлнĕ.

(ТАСС.)

Н. И. Бухарина, А. И. Рыкова, Г. Г. Йагодана, Н. Н. Крестинскине, А. П. Розенгольца, В. И. Иванова, М. А. Чернова, Г. Ф. Гринькова, И. А. Зеленскине, С. А. Бессонова, А. Икрамова, Ф. Ходжайева, В. Ф. Шаранговича, П. Д. Зубарева, Т. П. Буланова, Л. Г. Левина, Д. Д. Плетнева, И. Н. Казакова, В. А. Максимов-Диковскине, Крючкова — вĕсем Совет Союзне курайман тăшманла йутçĕршыв государствисен разведкисен заданийĕ тăрăх, йутçĕршыв государствисене майлă шпионла, диверçилĕ, террорла ĕçсем тăвас, ССР Союзĕн Çар хăватне хавшатас, çак государствăсене ССР Союзĕ çине вăрçăпа тапăнма провокацилĕ ĕç тăвас, ССР Союзне ваклаcа пĕтерсе унтан Украинăна, Белоруççине, Вăтам-Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Приморйене татса илсе çав асăннă йутçĕршыв государствисене парас, йулашкинчен тата ССР Союзĕнчи халăхи социалисăмла обществăлă тата государствăлă стройа сирпĕтсе антарас, капиталисăм йĕркипе буржуази влаçĕ туса хурас тĕллев тытнă „сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорлă ушкăн

ĔÇĔ ТĂРĂХ АЙĂПЛАСА ÇЫРНИ

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем йĕрлени тăрăх çаксене тупса палăртнă: ССР Союзне курайман тăшманла йутçĕршыв государствисен заданийĕ тăрăх, çак ĕçпе айăпланакансем „сылтăмла-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн организациленĕ; вăл ушкăн—ССР Союзĕнчи халăхи социалисăмла обществăла тата государствăла стройа сирпĕтсе антарас, ССР Союзĕнче капиталисăм йĕркипе буржуази влаçĕ туса хурас, ССР Союзне татăкăн-татăкăн пайласа унтан Украинăна, Белоруççине, Вăтам Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Приморйене татса илсе çав асăннă йутçĕршыв государствисене парас тĕллев лартнă.

Следстви çакна тупса палăртнă: „Сылтăмла-троцкисла блок" хăйĕн речесенче троцкиссен, сылтăмрисен, зиновйевцăсен, меншевиксен ес ерсен, Украинăри, Белоруççири, Грузири, Арменири, Азербайджанри, Вăтам-Азири республикăсенчи буржуалă националиссен совета хирĕçле вăрттăн ĕçлекен ушкăнĕсене пĕрлештерсе тăнă. Ку çак следствин материалĕсемпе çеç мар, тата ССР Союзĕнче тĕрлĕ вырăнсенче пулса иртнĕ суд процесĕсен материалисемпе те, уйрăмăн илсен, ССРС Верховнăй Сучĕн Специальнăй присутствийĕ 1937 çулти ийунĕн 11-мĕшĕнче суд тунă çар заговорщикĕсен—Тухачевскипе ыттисен ушкăнĕн процес материалĕсемпе тата Грузи ССР Верховнăй Сучĕ 1937 çулти ийулĕн 9-мĕшĕнче суд тунă Грузири буржуалă националиссен—Мдивани, Окуджава тата ыттисен ушкăнĕн процес материалĕсемпе çирĕпленет.

Совет Союзĕнче нимĕнле тĕрексĕр тăрса йулнă „сылтăм-троцкисла блокра" тăнисем ССР Союзĕнчи халăхи социалисăмла обществăла тата государствăла стройа хирĕç кĕрешсе влаçа хăйсен аллине çавăрса илессине хăйсен пĕтĕм шанчăкĕсене йутçĕршыв агрессорĕсем хĕçпăшаллă вăйсемпе пулăшасси çине хунă. Çав пулăшусемшĕн заговорщиксем ССР Союзне татăкăн-татăкăн ваклама, Украинăна, Приморйене, Белоруççине, Вăтам-Азири республикăсене, Грузине, Арменине, Азербайджана ССР Союзĕнчен агрессорсене татса пама пулнă.

„Сылтăм-троцкисла блокшăн" çÿлте асăннă йутçĕршыв государствисен представителĕсемпе çак ĕç пирки килĕшсе татăлма çăмăл пулнă, мĕншĕн тесен, çак заговора хутшăнвисенчен нумайĕшĕ йут çĕршыв разведкисен тахçанхи агенчĕсем пулнă, нумай çулсем хушши çак разведкăсене майлă шпионла ĕç туса пынă.

Ку вăл чи малтан заговора чĕрĕ вăй парса хавхалантаракансенчен пĕрне—халăх тăшманне Троцкине тивет. Вăл Гестапопа сыхăну тытнине троцкисла-зиновйевла террорла центăрăн 1936 çулхи августри тата совета хирĕçле троцкисла центăрăн 1937 çулхи йанварти процессенче йăр уççăн кăтартнă.

Анчах та, çак ĕç тăрăх следстви аллинче пур материалсем çакна çирĕплетеççĕ: халăх тăшманĕ Троцкий нимĕçсен политикăла полиципе тата ытти çĕршывсен разведкисемпе сыхăну тытни чылай малтан пулнă. Следстви çакна тĕплĕн палăртнă: Троцкий Германи разведкипе 1921 çултах, Англи „Интеллиженс-Сервисĕпе" 1926 çултанпа сыхăннă пулнă.

Çак ĕç тăрăх айăплакансене илес пулсан, айăпланакансенчен нумайăшĕ, вĕсем хăйсем йышăннă тăрăхах, нумай вăхăт хушши йутçĕршыв разведкисен шпионĕсем-агенчĕсем пулнă.

Çапла, айăпланакан Н. Н. Крестинский халăх тăшманĕ Троцкин заданийĕ тăрăх Германи разведкипе 1921 çултах тăван çĕршыва сутмала сыхăнува кĕнĕ.

Айăпланакан А. П. Розенгольц—троцкиссен вăрттăн ĕçлекен ушкăнĕн руководителĕсенчен пĕри—Германи Генеральнăй штабне усăллă шпионла ĕçе 1923 çулта, Англи разведки валли 1926 çулта ĕçлеме тытăннă.

Айăпланакан Х. Г. Раковский, Л. Троцкин уйрăмах сывăх тата шанчăклă çыннисенчен пĕри, 1924 çултанпа Англин „Интеллиженс-Сервисăн" агенчĕ, 1934 çултанпа Йапони разведкин агенчĕ пулнă.

Айăпланакан М. А. Чернов Германине усăлă шпионла ĕçне 1928 çулта тытăннă, Германи разведкипе паллă емигрант-меншевик Дан пуçăрнипе тата вăл пулăшнипе сыхăннă.

Айăпланакан В. Ф. Шаранговича Польшă разведки хăй патне илсе ССР Союзĕнче шпионла ĕç тума 1921 çулта ССР Союзне йăвă пулнă.

Айăпланакан Г. Ф. Гринько 1932 çулта Германипе Польшă разведкисен шпионĕ пулса тăнă.

„Сылтăм-троцкисла блок" руководителĕсем, çав шутрах çак ĕç тăрăх айăпланакан Рыков, Бухарин тата ыттисем хăйсемпе перле пулнă çынсем йутçĕршыв разведкисемпĕ шпионла сыхăну тытни çинчен лайăх пĕлсе тăнă, çак шпионла сыхăнува сарма пур майсемпе те пулăшнă.

Çаксем пурте, йутçĕршыв разведкисенче тăнă господасем ССР Союзне ваклаcа пĕтерме тата ССР Союзĕнчен чылай облăçсемпе республикăсене йутçĕршыв государствисене пама мĕншĕн авсаттăнах килĕшнине çителĕклĕ кăтартса параççĕ.

„Сылтăм троцкисла блок" йутçĕршыв разведкисемпе килĕшÿ тăвасси, çавăн пекех тата çакăн пирки те çăмăлланнă: çак ĕçпе айăпланакан заговорщиксенчен хăшпĕрисем патша охранкин провокаторĕсемпе агенчĕсем пулнă.

Совет государствинче ответлă вырăнсене кĕрсе кайнă провокаторсем, çапах та, хăйсен рабочи класа хирĕçле, социалисăм ĕçне хирĕçле преступленийĕсене тăрă шыв çине кăларассинчен шиклеме пăрахман. Хăйсене тăрă шыв çине кăларасран йăланах шикленсе тăнипе вĕсем хăйсен пĕртен-пĕр çăлăнăçне—Совет влаçне çĕмĕрсе тăкнинче, Совет стройне пĕтернинче, ăлпутсемпе капиталиссен влаçне кайала çавăрса килнинче çеç курнă. Çавăнпа та вĕсем патша охранкине сутăннă. Патша охранки хÿттинче çеç вĕсем хăйсене хăрушсăрлăхра шутлама пултарнă.

Çавăн пек, айăпланакан И. А. Зеленский 1911 çултанпах Самарти жандармă управленин агенчĕ пулнă. Çак вăхăтран вара Зеленский „Очкастый" тата „Салаф" йатпа Самарти большевиксен организацин ĕçĕсем çинчен жандармă управленине пĕрмайах пĕлтерсе тăнă, çакăншăн вăл кашни уйăхрах укçа илсе пурăннă.

Айăпланакан Иванов хăйĕн провокаторла ĕçне 1911 çултанпа тытăннă, ăна ун чухне Тулари охранкă хăй патне илнĕ, вăл охранкăн „Самарин" йатлă агенчĕ пулса тăнă.

Айăпланакан Зубарева патша полицийĕ 1908 çулта хăй патне илнĕ, унта вăл „Василий", „Палин" тата „Прохор" йатсемпе ĕçленĕ.

Следстви çакна палăртнă: Совет правителствине сирпĕтсе антарас, влаçа алла илес, ССР Союзĕнче капиталисăм йĕрки туса хурас тĕлĕшпе хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе, вĕсем, йутçĕршыв разведки кăтартса пынă тăрăх, çав разведкăсем валли шпионла ĕç туса пынă, фашисла агрессорсем тапансан ССР Союзĕ айа пултăр тесе сăтăрла тата диверçилĕ ĕçсем тунă, фашисла агрессорсем йенчен вăл тапăнăва хăвăртлатчăр тесе тĕрлĕрен провокацисем тунă, çавăн пекех тата партипе правителствă руководителĕсене тата советăн паллă деятелĕсене хирĕç террорла ĕçсем тăвассине организацилесе вĕсене пурнăçа кĕртсе пынă.

Совет государствине хирĕç шпионаж туни тата тăван çĕршыва пăрахса йутçĕршыва сутăнни

Следстви çакна палăртнă: çак ĕçпе айăпланакан „сылтăмла-троцкисла блокăн" пуçлăхĕсенчен нумайĕшĕ хăйсен ирсĕр ĕçĕсене Троцкий кăтартса панипе тата хăшпĕр йутпатшалăхсенчи генеральнăй штабсенче тĕплĕн хатĕрленĕ плансем тăрăх туса пынă.

Германи разведкин агенчĕ—паллă троцкис, айăпланакан Крестинский ССР Союзĕн Прокуратуринче 1937 çулхи декабĕрĕн 2-мĕшĕнче допрос тунă чухне çапла каланă:

„Епĕ Троцкий хушнипе нимĕçсемпе шпионла сыхăну тытма пуçларăм. Вăл мана çакăн пирки Сект генералпа калаçма хушрĕ"
(т. 3 л. д. 102).

Троцкисла организаци нимĕçсен разведкипе сыхăну мĕнле пуçласа йани çинчен каланă чухне, айăпланакан Крестинский çакна кăтартнă: троцкиссем нимĕç разведкине шпионла материалсем парса тăнăшăн, троцкисла организацине вăрттăн ĕçлесе пыма рейхсвертан укçа илсе тăма вăл 1921 çулта Германин рейхсвер командуйушчийĕпе-Сект генералпа калаçнă.

Кун пирки айăпланакан Крестинский çапла каланă:

„...Троцкий мана Берлина çитсен çак ыйту тăрăх Сект генералпа калаçма хушрĕ. Троцкий хушнине епĕ пурнăçа кĕртрĕм..."
(т. 3, л. д. 14 об.).

Айăпланакан Крестинский хăйĕн тата хăйпе пĕрле ĕçлекейсен ултавлă ĕçĕсем çинчен каласа çакна кăтартнă:

„Сект тата Хассе генералсемпе епĕр ССР Союзĕн территорийĕнче, рейхсвер йаракан разведкăсене пĕр чарусăр хамăр çĕршыва кĕртсе, рейхсверăн разведкă тăвакан опорлă пунктчĕсем тума тата рейхсвера разведкă материалсем парса тăма, урăхла, простă каласан, нимĕçсен шпионĕсем пулма килĕшсе татăлтăмăр. Çакăншăн пире троцкисла контрреволюцилĕ ĕçсем туса пыма рейхсвер çулленех 250 пин марок укçан субсиди парса тăма пулчĕ". (т. 3, л. д. 102).

„Субсидине çулталăкра темиçе хутчен те тăгăшах, пайăн-пайăн илсе тăнă, нумай чухне Мускавра, сайра хутра Берлинра...

Мускавра вăл укçана мĕнле те пулин сăлтавпа илме май пулмасан, ăна епĕ Берлинра тÿрех Сект генералтан илнĕ, укçана, йăланах тенĕ пек, Мускава хам килсе илсе Троцкине панă". (т. 3, л. д. 15).

Тепĕр паллă троцкис, совета хирĕçле вăрттăн кĕрешекен руководителсенчен пĕри, заговорта активлă ĕçлекенскер, шпион пулса ĕçленĕ айăпланакан Розенгольц, следствинче Троцкийпе рейхсвер хушшинче килĕшÿ пурри çинчен ĕнентерсе çапла каланă:

„Манăн шпионла ĕç 1923 çулта, Троцкий хушнă тăрăх, рейхсвер командуйушчийне — Сектă тата нимĕçсен генеральнăй штаб начальникне — Хассене вăрттăн материалсем чылай пĕлгернĕ хыççăн, пуçланса карĕ. Малала манпала ССР Союзĕнчи . . . . посолĕ № г-н тÿрех хăй сыхăнчĕ, ăна епĕ тăтăшах шпионла сведенисем парса тăтăм. № г-н тухса кайсан, епĕ хамăн шпионла сыхăнăва çĕнĕ № г. посолпа тытса тăтăм", (т. 6. л. д. 131 об.).

Германире влаçа фашиссем илнĕ хыççăн троцкиссен шпионла ĕçĕ тата та анлăрах сарăлнă, ку ĕçе тÿррех хамăр çĕршыва парăнтармала тăвас майпа туса пынă.

Айăпланакан Бессонов, хăй йышăннă тăрăх вăл ССР Союзне хирĕç кĕрешес пирки троцкиссем Германи фашисĕсемпе, пуринчен ытла çар çыннисемпе, калаçас çĕрте активлă хутшăннă, совета хирĕç тунă заговора пулăшса пырасси çинчен фашиссен партин тулашĕнчи политикă пайĕнче ĕçлекен Розенбергăн сывăх сотрудникĕпе—Дайцпа хăй калаçнă çеç мар, тата вăл Л. Троцкий Гесспа, Нидермайерпа тата Хаусховер профессорпа тĕл пулса калаçнисем çинчен те пĕлсе тăнă. Вĕсемпе Троцкий, совета хирĕçле троцкисла центра суд тунă чухне Пйатаков каласа кăтартнă условисем тăрăх, килĕшÿ тунă.

Айăпланакан Бессонов çакна кăтартнă:

„... Çак условисенчен курăнать ĕнтĕ... троцкиссен вăрттăн ĕçĕн тĕп вырăнĕ ССР Союзĕн ăшĕнче аркатулă шпионла, диверçилĕ тата террорла ĕçсем тăвасси çине куçнă".
(т. 11, л. д. 106).

Л. Троцкийпе тата ССР Союзĕнчи троцкисла организацине фашисла ушкăнсем хушшинче килĕшÿ пуррине, Германи разведкин кăтартувĕсем тăрăх ССР Союзĕнче тăшмана парăнтармала тăвас йенĕпе ĕçсем пынине следствире çак ĕç тăрăх айăпланакансем ыттисем те йышăннă.

Анчах та, тара кĕрешнĕ троцкиссен ĕçĕ вăрçăра Совет Союзне парăнтармала тăвас тĕлĕшпе Германи фашисăмĕпе сыхăннипех чарăнман. Вĕсем, совета хирĕçле заговора хутшăннă ытти çынсемпе пĕрле, Л. Троцкийпе килĕшÿлĕ пулса тата тепĕр фашисла агрессор çине—Йапони çине çул тытнă.

Совета хирĕçле заговорщиксем Йапони разведкипе сыхăнса тăни, следстви материалĕсенчен çакăн пек курăнса тăрать.

Айăпланакан Крестинский кăтартса панă тăрăх, вăл Л. Троцкийпе, Меранра—1933 çулта—тĕл пулнă вăхăтра ăна Троцкий Йапони разведкипе тата ытларах таччăн сыхăнса тăрассине йĕркелесе йăма кирлĕ, тесе каланă.

Çакăн çинчен Крестинский Пйатакова тата заговорăн ытти пуçлăхĕсене пĕлтернĕ, вĕсем айăпланакан Раковский урлă тата заговорта пулнă ытти çынсем урлă Йапони представителĕсемпе сыхăну тытма пуçланă, Йапони представителĕсем совет влаçне сирпĕтсе пăрахас ĕçре заговора хĕçпăшаллă вăйпа пулăшма сăмах панă, çакăншăн вара заговорщиксем Йапонийĕ совет Приморйине пама пулнă.

Следстви палăртнă тăрăх, айăпланакан Раковский хăй Йапонире пулнă чухне 1934 çулта çулла Пйатаковран çакăн пек кăтарту илнĕ:

„Çавăнпа пĕр вăхăтрах тата ССР Союзне хирĕç правителствăсемпе килĕшÿлĕн ĕçлесе тăрас тĕлĕшрен хамăрăн тулашри ĕçсене те вăйлăлатас пулать... Токиона кайнипе усă курма тăрăшас пулать, ку тĕлĕшрен .....правителстви кирлĕ утăмсем тăватех теме пулать".
(т. 4. л. д. 194).

Айăпланакан Раковский хăйне хушнă çак ĕçе пурнăçа кĕртнĕ, вăл, Токиора пулса, çăннипех те..... ушкăнсемпе преступленийĕ сыхăну тытассине йĕркелесе йанă.

Айăпланакан Раковский ку тĕлĕшпе çакна кăтартса панă:

„Çак пĕтĕм обстойателствăсенчен ĕнтĕ логикă йенĕпе те, практикăлă ĕçре те çак факт тухса тăчĕ: епĕ... хам Токиора пулнă вăхăтран вара тÿррĕмĕнех.... агенчĕ-шпионĕ пулса тăтăм... Мана çав ĕçе.... правителстви хушнă тăрăх, № г-н хутшăнтарчĕ. № господин—капиталисăмла-феодаллă Йапонин политикăлă ĕçре пысăк влийани парса тăракан çынĕ, унăн чи паллă плутократчĕсенчен пĕри".
(т. 4. л. д. 186).

Айăпланакан Раковскийех, халăх тăшманĕ Л. Троцкий Англи разведкипе сыхăнса тăни çинчен каласа, çакна кăтартнă:

„Епĕ пĕлсе тăнă тăрăх, Троцкий 1926 çул вĕçĕнчен пуçласа „Интеллиженс-Сервис" агенчĕ пулса тăнă. Ун çинчен мана Троцкий хăй пĕлтерчĕ"...
(т. 4, л. д. 363).

„Сылтăмла-троцкисла блок" составне кĕнĕ буржуалă националиссен ушкăнĕ те çавăн пекех йутçĕршывсен разведкисемпе таччăн сыхăнса тăнă.

Çапла, нимĕçпе Польшă разведкисен агенчĕ пулса тăракан айăпланакан Гринько, Украинăри национал-фашисла организацин (вăл унăн руководителĕсенчен пĕри) совета хирĕçле ĕçĕсем çинчен каласа, çакна кăтартнă:

„...Совет влаçне хирĕç Украинăра тума шутлана пăлхавлă выступленине вăрçăлă пулăшу парасси пирки Польшăпа калаçса татăлма кирли çинчен тăракан ыйтăва епĕр хамăр организацире сÿтсе-йавни 1930 çулта пулнă. Польшăпа çакăн пирки калаçу иртернĕ хыççăн, килĕшÿ туса çитертĕмĕр, вара Польшăн генеральнăй штабĕ Украинăна хĕçпăшалсем куçарас ĕçе, диверсантсемпе Петлюрă емиссарĕсене каçарса йарас ĕçе вăйлăлатрĕ".
(т. 9, л. д. 18).

Малала тата:

„1932 çулăн вĕçĕнче епĕ, хамăн националисла ĕçсене май, № г-па сутăнчăклă сыхăну тытма пуçларăм. Епĕр унпа манăн службăри кабинетра тĕл пулнă, унта № г-н Германи концессин ĕçĕсемпе пыратчĕ".

„1933 çулăн иккĕмĕш çурма çулĕнче № г-н мана тÿрех каларĕ: Украинă ыйтăвĕ тăрăх Германи фашисĕсем Украинăри националиссемпе пĕр шухăшлăн сыхăнса ĕçлесшĕн, терĕ. Епĕ № г-на, пĕрле сыхăнса ĕçлеме килĕшетпĕр, тесе ответлерĕм. Унтан малала, 1933—1934 çулсен тăршшĕнче епĕ № г-па темиçе хут та тĕл пултăм, хăй ССР Союзĕнчен кайас умĕн вăл мана № г-нпа сыхăйтарчĕ, унпа вара епĕ хаман сутăнчăклă сыхăнусене малала туса пытăм".
(т. 9, л. д. 286 об.).

Совета хирĕçле заговорта пулнисенчен тепри, Узбекистанри националисла организацин руководителĕсенчен пĕри — айăпланакан Икрамов çапла кăтартса панă:

„Пирĕн умма йăланах Йевропăри вăйла государствăсенчен пирĕн çине—совет влаçне хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешнĕ вăхăтра пире тÿррĕмĕнех пулăшу паракан государствă çине шанса тăма кирли çинчен ыйту тухса тăратчĕ"...
(т. 12, л. д. 59, 60).

„... Контрреволюцилĕ организацин хăшпĕр членĕсем, пире пулăшу парассине пуринчен ытла Англи тума пултарĕ, тесе шутлатчĕç, мĕншĕн тесен вăл вăйлă çĕршыв, тÿррĕмех хĕçпăшаллă çапăçу пына вăхăтра пире кирлĕ чухлĕ вăй парса пулăшма пултарĕ, тесе шутлатчĕç"...
(т. 12, л. д. 60).

Айăпланакан Шарангович, — Польшă разведкин агенчĕ тата Белоруççи национал фашисĕсен совета хирĕçле организацин руководителĕсенчен пĕри,—çак организаци хăйĕн аркатулă ĕçне сылтăмрисемпе „сылтăмла-троцкисла блок" кăтартса панипе кăна мар, вăл тата Польшă разведкин кăтартувĕсем тăрăх та туса пынă, тесе йышăннă.

Çакăн пирки айăпланакан Шарангович акă мĕн кăтартса панă:

„Çак вăхăт тĕлне (1933 ç.) сылтăмрисемпе троцкиссем тата национал-фашиссем хушшинчи пур тĕрлĕ хирĕçÿсем те пĕтсе çитнĕ. Епĕр пурсăмăр та хамăр умма пĕр задачă кăна — совет влаçне хирĕç пур тĕрлĕ майсемпе те (унта террор, диверçилĕ тата сăтăрлă ĕç те кĕрет) кĕрешес задачă лартнă. Çав нацилĕ республикăн территоринче ĕçленĕ виçĕ организацин пурин те тĕп тĕллевĕ — Белоруççине Совет Союзĕнчен татса илсе, „никама пăхăнса тăман" буферлă государствă тăвас тĕллев пулнă, çав государствă вара, паллах, Польшăпа Германи аллинче пулмала...".
(14, л. д. 27).

Малала тата:

„Епĕр илсе тăнă директивăсем, пĕр йенчен, Мускавран, сылтăмрисемпе троцкиссен центрĕнчен, тепĕр йенчен, Варшавăран—Польшă... çыннисенчен пулнă пулсан та, анчах вĕсен содержанинче пĕр-перинчен нимĕнле уйрăмлăхсем те пулман, вĕсем пурте пĕр пек пулнă, епĕр вĕсене пурнăçа кĕртсе пынă".
(т. 14, л. д. 31).

Айăпланакан Рыков сылтăмрисем тăван çĕршыва пăрахса фашисла Польшăпа сутăнчăкла сыхăнса тăни чăнахах та пуррине йăлтах çирĕплетнĕ. Ку тĕлĕшпе вăл çапла кăтартса панă:

...„Сылтăмрисен организацинче пулнисен ушкăнĕ, сылтăмрисен центрĕ кăтартса панипе тата епĕ хам личнă кăтартса панипе килĕшÿлĕн, хамăрăн заговорла, сутăнчăклă плансене пурнăçа кĕртсе пырас шутпа фашисла Польшăпа, уйрăмах—Польшăн разведкă органĕсемпе сыхăну тытмала турĕ".
(т. 1, л. д. 11 №).

Малала, Белоруççине ССР Союзĕнчен татса илес плансем çинчен каласа, айăпланакан Рыков çапла кăтартса панă:

„Пире ун чухне пĕрлештернĕ пĕтĕмĕшлĕ формулăн шухăшĕ çапла пулнă: полякcемпе калаçнă чух... епĕр Белоруççи республикине ССР Союзĕнчен татса илсе, ăна Польшăна пăхăнса тăракан „никама пăхăнман" Белоруççи тума килĕшесси пулнă...".
(т. I. л. д. 119).

Следстви палăртнă тăрăх, сылтăмрисен совета хирĕçле ушкăнĕн „сылтăмла-троцкисла блокăн" пĕтĕм преступленийĕ ĕçĕ çакна тĕплĕн кăтартса парать: сылтăмрисем, çав заговорта пулнă ытти çынсем пекех, йутçĕршыв генштабĕсен агентури пулнă.

Сылтăмрисенчен пĕрисем—тÿрĕмĕнех, теприсем хăйсен тусĕсем урлă йутçĕршыв государствисен разведкисемпе сыхăнса тăнă, совет влаçне хирĕç кĕрешессинче вĕсем çине шанса тăнă.

Айăпланакан Бухарин, Л. Троцкий нимĕç фашисĕсемпе калаçусем тунине пĕлсе тăнă, çавнашкалах тата, Л. Троцкий пекех, ССР Союзне вăрçăра парăнтармала тăвассине тата Украинăна, Белоруççине, Приморйене, Грузине, Арменине, Азербайджана тата Вăтам Азири республикăсене ССР Союзĕнчен татса илмеле тăвассине хатерленĕ.

Çакна айăпланакан Бухарин пĕтĕмĕшпех йышăннă. Ку тĕлĕшпе вăл çакна кăтартса панă:

„Çав вăхăт тĕлне, Троцкий нимĕç фашисĕсемпе калаçусем туса, вĕсене территорисем пама пулнă вăхăтра, сылтăмрисем троцкиссемпе пĕр блокра пулнă. Радек мана çапла каласа пачĕ: Троцкий блок влаçа пырассинче Германипе Йапони ССР Союзĕ çине вăрçăпа тухсан, вăрçăра ССР Союзне парăнтармала тăвассине тĕп шанчăк, тесе шутлать, çавăн хыççăн вара Германине — Украинă, Йапонине—Инçет-Хĕвелтухăçне памала тума хушать. Ун çинчен мана Радек 1934 çултах пĕлтерчĕ..."
(т. 5. л. д. 107).

Çав тĕлĕшпе айăпланакан Ф. Ходжайев следствире çапла кăтартса панă:

„Узбекистанпа Туркменине ССР Союзĕнчен уйăрса Йапони тата Германи аллинче тăракан тумала, анчах та ун пек тусан Англи патĕнчен те иртсе кайма çук, çавăнпа та акалчансемпе сыхăнса ĕçлеме кирлĕ пулать, тесе кăтартса панă Бухарин. Вĕсене Англи протекторачĕ тăвасси реальнăрах пулнă, çавăнпа та çав тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă.
(13 т. л. д, 89—89 т. й.)

Айăпланакан Ф. Ходжайев кăтартса пани следстви производствин ытти материалĕсемпе те çирĕпленет. Вăл материалсем „сылтăм-троцкисла блокăн" хамăр çĕршыва тăшмана парăнтармала тăвас çул çине тăрса ĕçленине уççăнах кăтартса параççĕ.

Акă, айăпланакан Рыков ку ыйту пирки çапла каласа панă:

„Хамăр çĕршыва тăшмана парăнтармала тăвас позицийе илсен, унпа Бухарин та пĕтĕмпех килĕшсе çав позици çинчен вăл пирĕнтен те çивĕчрех калаçнă. Тĕслĕхрен акă вăрçă сиксе тухсан нимĕçсене килме фронт уçса парасси çинчен вăл сĕнÿ парса татăклăн калаçнă".
(1 т., л. д. 152).

Çав ыйту çине хăй мĕнле пăхни çинчен кăтартса панă чух, айăпланакан Рыков çапла каланă:

„Сулахай центрăн ытти членĕсем пекех, пирĕн к. р. организацин представителĕсем епĕр пулăшу шыранă нимĕç фашисĕсемпе сутăнса калаçни çинчен епĕ те пĕлсе тăнă. Паллах, вĕсенчен пулăшу кĕтес пулсан Германи фашисĕсене пирĕн парăнмала пулнă, епĕр çав çул çине тăрса ĕçленĕ".
(1 т., л. д. 151 т. й.).

Çапла пулнă „сылтăм-тротцкисла блокăн", изменниксен, йутçĕршыв разведкисене совет государствин вăрттăнлăхĕсене сутнă, ССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕпе, рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин никама пăхăнса тăманлăхĕпе, ăна никам тĕкĕнме пултарайманлăхĕпе сутă тунисен шпионла, Совет Союзне вăрçăра парăнтармала тăвас киревсĕр ĕçĕ.

Хăйсен айăплă шухăшĕсене ĕçе кĕртсе, совета хирĕçле заговорщиксем, йутçĕршывсен фашисла разведкисем тÿрех пана хушусем тăрăх, Совет Союзĕн уйрăм республикисенче, крайсенче, облăçсенче диверçиле, сăтăрла йăвасем организациленĕ, çав йăвасемпе промышленнăçăн чылай предприйати-

(Малалли 3-мĕш страницăра)

Н. И. Бухарина, А. И. Рыкова, Г. Г. Йагодана, Н. Н. Крестинскине, А. П. Розенгољца, В. И. Иванова, М. А. Чернова, Г. Ф. Гриђкона, И. А. Зеленскине, С. А. Бессонова, А. Икрамова, Ф. Ходжайева, В. Ф. Шаранговича, П. Д. Зубарева, Т. П. Буланова, Л. Г. Левина, Д. Д. Плетнева, И. Н. Казакова, В. А. Максимов-Диковскине, Крӳчкова — вӗсем Совет Сойузне курайман тӑшманла йутҫӗршыв государствисен разведкисен заданийӗ тӑрӑх, йутҫӗршыв государствисене майлӑ шпионла, диверҫиле, террорла ӗҫсем тӑвас, ССР Сойузӗн Ҫар хӑватне хавшатас, ҫак государствӑсене ССР Сойузӗ ҫине вӑрҫӑпа тапӑнма провокацилӗ ӗҫ тӑвас, ССР Сойузне вакласа пӗтерсе унтан Украинӑна, Белоруҫҫине, Вӑтам-Азири республикӑсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Приморйене татса илсе ҫав асӑннӑ йутҫӗршыв государствисене парас, йулашкинчен тата ССР Сойузӗнчи хаљхи социалисӑмла обществӑлӑ тата государствӑлӑ стройа сирпӗтсе антарас, капиталисӑм йӗркипе буржуази влаҫӗ туса хурас тӗллев тытнӑ „сылтӑмла-троцкисла блок“ текен заговорлӑ ушкӑн

ӖҪӖ ТӐРӐХ
АЙӐПЛАСА ҪЫРНИ

сене, транспорта, йалхуҫалӑхне, тӑварҫавӑрнӑш системине ҫавӑрса илнӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫав фашисла государствӑсен ҫарӗсене пирӗн фронтсене предателе уҫса пама фашиссемпе килӗшӳ туса, сылтӑмтроцкисла заговора хутшӑннисем Хӗрлӗ Ҫарӑн материаллӑ-техникӑла никӗсне оборонӑ — промышленнӑҫне хавшатма хатӗрленӗ

Аркатулӑ диверҫилӗ ӗҫсем тума хатӗрленӗ ӗҫсемпе пӗрлех, заговоршчиксем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирен социалисӑмла тӑван ҫӗршывӑн тӗп вырӑнта тӑракан оборонӑ предприйатисене сирпӗтсе йарса пӗтерме шутланӑ. Вӗсем ҫавӑн пекех тата чукунҫул ҫинче ҫар пойӗсӗсене ҫынсене нумай вӗлерсе пӗтермеле крушенисем тума хатӗрленӗ.

Вӗсем хӑйсем умне ҫӗршывӑн пӗтӗм хуҫалӑх пурнӑҫне чарса лартас, ҫара апат-ҫимӗҫ тата хӗҫпӑшал тӑратассине чарса лартас задачӑна лартнӑ.

Следстви ҫакна тупса палӑртнӑ: ҫакнашкал диверҫилӗ тата сӑтӑрлӑ ӗҫсене халӑх хуҫалӑхӗн тӗрлӗ участкисенче заговоршчиксем тунӑ та.

Йутҫӗршыв разведкисен тарҫи — халӑх тӑшманӗ Троцкий, совета хирӗҫле заговора йертсе пыракансем патне йанӑ чылай ҫырӑвсенче чылай тата хӑйен кӑтартӑвӗсенче Совет Сойузӗнче сӑтӑрлӑ тата диверҫиле ӗҫсене вӑйлатма хушнӑ.

Заговорта йертсе пырас вырӑнта тӑнӑ айӑпланакан Крестинскине 1933 ҫулта Меранре Л. Троцкий ҫапла каланӑ:

„Ана, Троцкине, диверҫиле-сӑтӑрлӑ ӗҫсем тӑвас тата терроорла ӗҫсем хатӗрлес йенӗпе чӑннипех пысӑк ӗҫ туни ҫинчен вӑл калама пултарсан ҫеҫ нимӗҫсемпе калаҫу тума ҫӑмӑлтарах пулать“ (т. 3, л. д. 54—55).

Следстви ҫаксене палӑртнӑ: Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнче тунӑ диверҫилӗ чылай ӗҫсене совета хирӗҫле заговора хутшӑннисем, Йапони разведкин органӗсем тата халӑх тӑшманӗ Л. Троцкий панӑ кӑтартусем тӑрӑх, хатӗрлесе туса иртернӗ. Ҫапла, Йапони разведкин кӑтартӑвӗ тӑрӑх Волочайевка станцине Хор-Дормидоновкӑ хушшинче 501 номӗрлӗ ҫар грузне тийенӗ таварлӑ пойӑса крушени тӑвассине организациленӗ. Унчухне 21 сынна вӗлернӗ, 45 ҫынна суранлатнӑ. Йапонцӑсен ҫав кӑтартӑвӗ тӑрӑхах, Сучаљри 10 тата 20-мӗш номӗрлӗ шахтӑсенче диверҫи тунӑ. (45-мӗш. том, л. д. 1—14 страницӑсене пӑхӑр).

Троцкирен тухнӑ ҫакнашкал директивӑсем ҫинченех следствинче айӑпланакан Розенгољц тӗплӗн кӑтартса панӑ, вӑл ҫапла каланӑ:

„Тулти суту-илӳ халӑх комиссариатӗнче Германипе Йапонине тӳрех пулӑшмали сӑтӑрлӑ ӗҫ тӑвасси ҫинчен Троцкирен Крестинскипе Седов урлӑ илнӗ кӑтартуна пӗрлех тата манӑн сӑтӑрлӑ ӗҫӗн характерӗ ССР Сойузӗнчи ...... г. № тата г. № посолсем кӑтартса панинчен те килеҫҫӗ. Ҫав посолсемпе ҫыхӑну тытни сӑтӑрлӑ ӗҫ тӑвассинче пысӑк вырӑнта тӑнӑ, мӗншӗн тесен манӑн хамӑн ӗҫре вӗсен конкретлӑ кӑтартӑвӗсем тӑрӑх ӗҫлеме тивнӗ.

Тухачевскипе, тата Рыковпа тачӑ ҫыхӑну тунӑ хыҫҫӑн, епӗ Тухачевскине Крестинский урлӑ, Рыкова — хам Троцкий сӑтӑрлӑ ӗҫ тӑвасси ҫинчен панӑ кӑтарту ҫинчен пӗлтертӗм, вӑсем иккӗшӗ те епӗ тӑвакан ӗҫе ырласа йышӑнчӗҫ.

Тулти суту-илӳри сӑтӑрлӑ ӗҫ ҫак виҫӗ тӗп йенӗпе пулса пынӑ: пӗррӗмӗшӗ — ССРС шучӗпе Германипе Йапонине економикӑлӑ пулӑшу пани, иккӗмӗшӗ — ССР Сойузне политикӑла економикӑла сӑтӑр та сийен туни, виҫҫӗмӗшӗ — ССР Сойузне сийен кӳни“ (т. 6, л. д. 49).

„Сылтӑм-троцкисла блок“ кӑтартӑвӗсем тӑрӑх, айӑпланакан Шарангович Белоруҫҫи ССР-че йалхуҫалӑхӗпе промышленнӑҫра сӑтӑрлӑ ӗҫе анлӑн сарса йанӑ.

Ку тӗлӗшпе айӑпланакан Шарангович ҫапла каласа панӑ:

„хамарӑн сӑтӑрла шухӑшсене ӗҫе кӗртме вырӑнсенче сӑтӑрла, диверҫиле ушкӑнсем тунӑ. Епӗр пурте, организацине йертсе пыракансенчен пуҫласа унӑн рйадовой членӗсене ҫитиччен, национал-фашиссем пулнӑ, совет влаҫне хирӗҫле нимӗнле меслетрен йӗрӗнмесӗр, ССР Сойузӗнчен Белоруҫҫине татса илессишӗн ӗҫленӗ“ (т. 14 л. д. 40).

Айӑпланакан Чернов, Германи разведкипе унӑн ССР Сойузӗнчи вӑрттӑн агенчӗ пулса ҫыхӑннӑскер, хӑй ССР Сойузӗнче еслӑ вырӑнта ӗҫленипе усӑ курса Германи разведки панӑ заданисем тӑрӑх йалхуҫалӑхӗнче диверҫилӗ-сӑтӑрлӑ чылай ӗҫсем тунӑ.

Германи шпионӗ, айӑпланакан Чернов хӑй Германи резведчикӗпе — „Берлинер Тагелблат“ хаҫат корреспонденчӗ пулнӑ Шеферпа ҫыхӑну тытни тата йалхуҫалахӗнчи сӑтӑрлӑ ӗҫӗсем ҫинчен ҫапла каласа панӑ:

„Епӗ хатӗрлевсен комитетне ӗҫлеме куҫсан, Шефер мана нимӗҫсен заданине пачӗ — хатӗрлевсен комитечӗ йенӗпе, уйрӑмах — мобилизацилӗ запассен йенӗпе сӑтӑрлӑ ӗҫсем тумала.

Разведкӑ сӑтӑр тума панӑ задани, епӗ сылтӑмрисен организаци йенӗпе Рыковран илнӗ заданипе пӗр пек пулнӑ. Ҫапла вара епӗ вӗсене пурнӑҫа кӗртме пысӑк хаваслӑхпа тытӑнтӑм (т. 8, л. д. 98, об, 25).

Кун пирки айӑпланакан Чернов ҫапла кӑтартса панӑ:

„1934 ҫулта, Рыковпа унӑн дачинче тӗл пулсан, епӗ унтан йалхуҫалӑхӗнче сӑтӑрлӑ ӗҫе анлӑн сарма задани илтӗм. Епӗ ҫак заданине пурнӑҫа кӗртрӗм, сӑтӑрла-диверҫилӗ ӗҫе ҫителӗклӗ таранах активлӑ туса пытӑм“ (т. 8, л. д. 98).

Йалхуҫалӑхӗнчи чылай аркатулӑ тата сӑтӑрлӑ ӗҫсене Узбекистанра та тупса палӑртнӑ, унта националисла организацисем ӗҫленӗ, вӗсем айӑпланакан Икрамовпа Ходжайев урлӑ совета хирӗҫле заговор центрне пӗрлешнӗ.

Ҫак националисла организацисен руководителӗсенчен пӗри Ходжайев файзулла ҫапла кӑтартса панӑ:

„Епӗр совет влаҫне хирӗҫ хӗҫпӑшалпа ҫапӑҫма кадр хатӗрленипе с чарӑнса тӑман, епӗр хаљчецех ССР Сойузӗн хӑватне хавшатас тӗллевпе активлӑ ӗҫленӗ“ (т. 13, л. д. 66.).

Узбекистанра сӑтӑрла ӗҫсене анлӑн туса иртернине айӑпланакан Икрамов та пӗтӗмпех ҫирӗплетнӗ, вӑл „сылтӑмла-троцкисла блок“ вӗсем умне ҫак задачӑсене лартни ҫинчен каласа панӑ:

„а) Узебкистанра хӗҫпӑшаллӑ востани тума хатӗрленес ӗҫе сарса йамала, хӗҫпӑшаллӑ восстанийе интервенци вӑхӑтне ҫывхартмала;

б), Сӑтӑрла ӗҫсем тупипе ӗҫҫыннисене Совет влаҫӗ ҫине тарӑхтарса, ҫавӑн урлӑ кирлӗ вӑхӑтра хӗҫпӑшаллӑ восстани тума май тӑвас шутпа, халӑх хуҫалӑхӗн пур пайӗсенче те сӑтӑрла тата диверҫилӗ ӗҫсене татӑклӑн сармала“.

„Кунсӑр пуҫне, хамӑр шутлана тӑрӑх, пирӗн сӑтӑрла ӗҫ ССР Сойузӗн оборонӑ тӗрекне ҫирӗплетсе пыма чӑрмантармала пулнӑ“ (т. 12. л. д. 95—96).

Йалхуҫалӑхӗнче, ҫавӑн пекех социалисӑм строителствипе халӑх хуҫалӑхӗн ытти пайӗсенче те ҫак ӗҫпе айӑпланакансем сӑтӑрла ӗҫсем туса пынӑ.

Айӑпланакан Гриђко финанс йенӗпе сӑтӑрла ӗҫсем туса пынӑ.

Айӑпланакан Гриђко ҫакна кӑтартса панӑ:

„Финанс халӑх комиссариачӗ йенӗпе туса пынӑ сӑтӑрла ӗҫӗн тӗп тӗллевӗ: совет укҫин тӗрекне вӑйсӑрлатасси, ССР Сойузӗн финанс тӗрекне вӑйсӑрлатасси, хуҫалӑха ишелтерессн, халӑха совет влаҫӗн финанс политики пирки тарӑхтарасси, налогсемпе тарӑхтарасси, перекет кассисене начар ӗҫлеттерсе, ӗҫукҫи вӑхӑтра тӳлемесӗр т. ыт. майсемпе те тарӑхтарасси. Ҫаксем вара халӑха Совет влаҫӗ ҫине тарӑхтармала пулнӑ тата заговорта тӑракансене хӑйсене майлӑ ҫынсем пухма, хаљхи йӗркене хирӗҫ хӗҫпӑшалпа кӗрешес ӗҫе сарма май памала пулнӑ“ (т. 9. л. д. 79).

Айӑпланакан Зеленский тата вӑл Центросойуспа коопераци системинче организациленӗ сӑтӑрҫӑсен группи сахӑр, ҫу, ҫӑмарта, махорка тата ытти таварсемпе суту-илӳ тӑвассине планлас ӗҫе пӑтраштарса пынӑ, йала тавар йарассине йурийех чарса тӑнӑ; пур майсемпе те учотпа отчот ӗҫне пӑтраштарса пынӑ. Ҫаксемпе вӗсем государствӑ укҫа-тенкине пӗр чарусӑр ҫаратма, тустарса пӗтерме май панӑ, потребителе ҫаратнине ырланӑ.

Айӑпланакан Зеленский вӑл хӑй Центросойузра таварсене шута илессипе отчот туса тӑрассине сӑтӑрла йӗркелени ҫинчен ҫапла каланӑ:

„Ҫавӑн пек йӗркере вӑрра тытма хӗн пулнӑ, тӳрӗ ӗҫлекен работник, учот ӗҫӗ йавӑр пирки, пӑтраштарса кайма пултарнӑ, часах, растратчиксен шутне лекнӗ“. (т. 10. л. д. 56).

Ҫавӑн пекех тата халӗ тӑрӑшыв ҫине кӑларнӑ йутҫӗршыв разведкисен агенчӗ — айӑпланакан Розенгољц та тӑшмана сутӑнса чылайах пысӑк сӑтӑрла ӗҫсем туса пынӑ.

Айӑпланакан Розенгољц тӑшмана сутӑнса туса панӑ хӑйӗн сӑтӑрла ӗҫӗсем ҫинчен ҫапла каланӑ:

„Троцкий Германипе тата Йапонипе килӗшӳ тытнӑ пулсан, епӗ ун ҫинчен пӗлнӗ (ун ҫинчен мана 1933 ҫулта Седовпа тӗл пулса курса калаҫнӑ чухне те, ҫавӑн пекех килӗшсе татӑлас пирки 1934 ҫулта курнӑҫса калаҫнӑ чухне те пӗлтернӗ), тата кун пирки епӗ Троцкийчен кирлӗ кӑтартусем илсе тӑнӑ пулсан манӑн тулашри суту-илӳ йенӗпе туса пынӑ сӑтӑрла ӗҫ те ҫав тӗллевпех пулса пынӑ“. (т. 6. л. д. 78).

Заговорщиксем диверҫилӗ, сӑтӑрлӑ ӗҫсене активлӑ туса пынӑ вӑхӑтрах, фашисла разведкӑсен приказӗсем тӑрӑх, пирӗн ҫӗршывра хаљхи йӗркене хирӗҫ хӗҫпӑшалпа бандитла кӗрешес ӗҫе йӗркелес задачӑ лартнӑ. ССР Сойузне хирӗҫ интервенци пуҫланнӑ тӗле Хӗрлӗ Ҫарӑн тылӗнче совета хирӗҫле бандӑсем туса востанине тухма хатӗрленнӗ.

Айӑпланакан Рыков ҫакна кӑтартса панӑ:

„Епӗр кулакла восстанисем туса партипе Совет влаҫӗн руководствине [illegible]йпа сирпӗтсе ывӑтас ҫул ҫине тӑтӑмӑр.“ (т. 1. л. д. 150).

Следстви ҫакна палӑртнӑ: Хӗрлӗ Ҫарӑн тылӗнче кулакла хӗҫпӑшаллӑ восстанисем тума хатӗрленни — ССР Сойузӗ ҫине тапӑнма хатӗрленекен фашисла государствӑсен планӗсемпе шучӗсенчен килнӗ, фашисла ҫӗршывсен генераљнӑй штабӗсен сигналӗ тӑрӑх троцкисла заговоршчиксем хӗҫпӑшалсемпе тухма хатӗрленсе тӑнӑ.

Ҫак фашисла разведкӑсен кӑтартӑвӗсем тӑрӑх заговорта тӑракансем бандитла-повстанчески кадӑрсем пухнӑ, вӗсене Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнче, Ҫурҫӗр-Кавказра, Совет Сойузӗн тата ытти вырӑнӗсенче те, сӑмахран, Узбекистанра, хӗҫпӑшалпа активлӑн кӗрешме хатӗрлесе пынӑ.

Ҫавӑн пирки айӑпланакан Ходжайев ҫапла каланӑ:

„Пирӗн организацисен практикӑла ӗҫри тӗп задачӑ вӑл — совета хирӗҫле активлӑ кадрсем хатӗрлесси, вӗсене ССР Сойузне хирӗҫ кӗрешме вӗрентесси пулнӑ. Епӗр организацире тӑракансене: совет влаҫне хирӗҫ кӗрешесси ҫивӗчленсе пырӗ, хӗҫпӑшалпа ҫапӑҫасси патне ҫитсе тӑрӗ, тесе кӑтартусем панӑ. Ҫавӑнпа та епӗр хамӑр организацисен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе те ӗҫленӗ“. (т. 13. л. д. 66).

Бандитла кадӑрсен организаторӗсем хӑйсен ӗҫӗнче контрреволюцилӗ елементсен йулашкисем ҫине тайӑннӑ, хӑйсен резервисене тултарас йенӗпе вӗсем Совет Сойузӗн территорине каҫса килекен басмачсен, шургвардейцӑсен йулашкисем, ҫине ҫавӑн пекех тата лагерсенче ларакан уголовнӑй бандитсем т. ыт. ҫине шанса тӑнӑ.

Айӑпланакан Икрамов Узбекистанри хӑй йертсе пынӑ буржуалӑ-националисла организацин бандитла ӗҫӗсем ҫинчен ҫапла кӑтартса панӑ:

„Малашнехи вӑхӑтсенче совет влаҫне хирӗҫ хӗҫпӑшал тытса кӗрешес ӗҫре усӑ курма кирлӗ пулнӑ кадрсене епӗр сыхласа усранӑ. Вӑл кадрсем пуринчен малтан кулаксен йулашкисем, чиркӳ ҫыннисем тата ӗлӗкхи басмачсем пулнӑ. Епӗр хамӑр организацин районсенчи йертсе пырас ӗҫсенче ларакан членӗсене вӑл кадрсене сыхласа усрама задани панӑ. Кунтан пуҫне епӗр, хӗҫпӑшаллӑ выступлени вӑхӑтӗнче совет территорийӗ ҫине чиклешйенчен хӑй вӑхӑтӗнче тарса кайнӑ басмачсен бандисем килеҫҫӗ, тесе шутласа тӑнӑ.“

(т. 12, л. д. 56)

(Йулашки ҫитес номӗрте)

Курс уҫӑлчӗ

СӖНТӖРВӐРРИ. Февралӗн 19-мӗшӗнче ПСК(б) Парти райкомӗ ҫумӗнче „РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Положенине“ вӗренмели агитаторсен 10 кунлӑ курсӗ уҫӑлчӗ.

Гр. Смирнов.

Шемшер шкулӗн кун-ҫулӗ

(Шкула уҫнӑранпа 87 ҫул тултарнӑ тӗле)

Хӑй мехелӗпе йухса выртакан Йӗршӳ шывӗ Шемшер йалне икӗ пайа уйӑрнӑ. Икӗ Шемшерӗпе те 30 хуҫалӑхран ытла пулман. Таврара куҫ ытамне кӗрейми уйхир, вӑрмансем кашласа ларнӑ. Ҫу ҫанталӑкӑн пуйанлӑхӗ шутласа кӑлармала мар пысӑк пулнӑ. Анчах самани ытла та тискер пулнӑ ун чухне.

Йӗри-тавра сарӑлса выртакан пуйанлӑхпа мӗн пурӗ те ик-виҫӗ ҫын кӑна кӑмӑл тӑраниччен усӑ курнӑ, нумайӗшӗсем сӗт-турӑхсӑр, аш-пӑшсӑр пурӑннӑ, сакӑрвун ҫул ӗлӗк икӗ Шемшерпе 33 хуҫалӑх шутланнӑ; вӗсенчен виҫҫӗшӗ кӑна шурӑ пӳртре пурӑннӑ, ыттисем мӑрйесӗр хура пӳртсенче краҫын вырӑнне кантӑр шӑмми йе хӑйӑ ҫунтарнӑ. Йунашарах Смирнов кулакӑн икӗ хутлӑ шатрун ҫуртӗнче Таланцев хуҫан пысӑк хупахӗ татти-сыписӗр ерех сутнӑ. Йалти куштан-кулаксем кашни ҫулах ҫӗр сутса ерех ӗҫнӗ, ҫав хушӑрах нумай чухӑнсен ҫӗнӗ тырӑна ҫитиччен тӑранса пурӑнмалӑх ҫӗр пулман. Хырӑҫӗ ҫав-ҫавах лучӑрканӑ. Хырӑҫ укҫи, ҫурт укҫи тӳленӗ, тӳлеймесен халӑх ҫине илсе тухса саламатпа йе хурӑн хуллипе ҫаптарнӑ.

Ҫакнашкал вӑхӑтра, 87 ҫул ӗлӗк, 1851 ҫулта февралӗн 28-мӗшӗнче Шемшерте Благоразумов дйакӑн хӑйӗн пӳртӗнче „халӑха турӑ саккунӗпе паллаштарас шутпа“ шкул уҫнӑ. Ҫав шкулта миҫе ача вӗренме пуҫлани паллӑ мар, анчах ҫав ҫулах май тата ҫентйабӗр уйӑхӗнче Сироткинпа Пикторинский дйачоксем каллех хӑйсен пӳрчӗсенче пӗрер шкул уҫнӑ, вара ҫав виҫӗ шкулта 27 ачаран ытла мар вӗренме тытӑннӑ. Учителсем ҫав дйакӑнпа дйачоксемех пулнӑ, Хватершӗн тата вӗрентнӗшӗн вӗренекен ачасен ашшӗ-амӑшӗсем укҫа тӳлесе тӑнӑ.

Вунпӗр ҫул хушши ҫавнашкал тытӑнса пынӑ. 1862 ҫултан пуҫласа ҫав сапаланса ларакан шкулсене пӗрлештерсе пӗр шкул туса хунӑ, вара шкул патшалӑх пурлӑхӗсен министерствин аллине куҫнӑ. Ҫав ҫул шкулта 30 арҫын ача, 2 хӗрача вӗреннӗ. Вӗрентекенсем дийакӑнпа дйачуксемех пулнӑ. 1868 ҫултан пуласа шкулта пӗр Дашков пуп вӗрентме тытӑннӑ. Шкула пуп пырсан вӗренекен ачасемшӗн татах та йавӑртарах условисем пуҫланнӑ. „Турӑ саккунне“ пӗлекен ачана ачашланӑ, пӗлменнисене чӗркуҫҫи ҫине тӑратнӑ, „турӑ саккунӗн“ кӗнекипех питрен йе пуҫран ҫапнӑ. Ахаљ те вырӑс чӗлхине чухламан чӑваш ачисемшӗн славйан чӗлхи татах та ытларах асаплантарнӑ.

1869 ҫулта „Патшалӑх пурлӑхӗсен министерствин аллинче тӑракан йалти шкултан“ „йалти обшчествӑлӑ пуҫламӗш халӑх шкулӗ“ (обшественное сельское начальное народное училище) туса хунӑ. Шкул йатне кирек мӗнле улӑштарсан та ачасене вӗрентес ӗҫ пупсемпе дийакӑнсен аллинчех йулнӑ. Ҫапла вара Шемшерти шкула 1878 ҫулччененех пупсемпе дийакӑнсем „вӗрентсе пурӑннӑ,“ 1878 ҫулта шкула Шупашкар уйесӗн училишчинчен вӗренсе тухнӑ Шупашкар хулинчи вырӑс мешчанӗ учителе килнӗ. Ҫав вӑхӑтала шкул халӑх хӑй вӑйӗпе йатарласа туса лартнӑ ҫуртра пулнӑ, вӗренекен ачасен йышӗ 56 ҫынна (2 хӗрача) ҫитнӗ.

1882 ҫулта Шемшере пирвайхи хут чӑваш учител, Шупашкар уйесӗнчи Шенерпуҫ вулӑсӗнчи Иван Афанасйев килнӗ. Вӑл Чӗмперти (хаљхи Уљйановск) учителсен чӑваш семинаринчен вӗренсе тухнӑскер пулнӑ. Афанасйев шкулта вӗрентме пуҫласан вӗренекен ачасен йышӗ 122 ҫынна ҫитнӗ, вӗсенчен 5 хӗрача.

Ҫав ҫул шкул ҫумӗнче воскресно повторителљнӑй клас уҫнӑ. Анчах Афанасйев нумай вӗрентеймен, ӑна ҫав ҫулах шкултан кӑларса йанӑ, вара тепӗр ҫул каллех Чӗмпӗрти чӑваш семинаринчен вӗренсе тухнӑ Павел Филиппов чӑваш учител килнӗ. Унӑн та, пупсемпе дйакӑнсен кӑмӑлне кайман пирки, ҫав ҫулах Шемшертен тухса каймала пулнӑ. 1884 ҫулта чӑваш учителсем вырӑнне Шупашкартан Белокуров дийакӑн ывӑлне учителе ӗҫлеме чӗнсе илнӗ. Шкул каллех пӗтӗмӗшпех пупсемпе дйакӑнсен аллине кӗрсе укнӗ.

1886 ҫул пуҫланнӑ тӗлеле шкул ҫурчӗ таварланса йулнӑ. Пысӑкрах ҫӗнӗ ҫурт лартмала пулнӑ, анчах патша самани шкул лартма пӗр пус та паман. Вара халӑх хӑйӗнчен укҫа пуҫтарса 1.600 тенкӗ тӑракан шкул ҫурчӗ туса лартнӑ. Ҫӗнӗ шкул ҫуртӗнче 188 ача вӗренме пуҫланӑ. Пирвайхи ҫулсенче шкулта пупсемпе дйакӑн, псаломшчик тата йалти кулаксен ачисем кӑна вӗреннӗ пулсан, ҫав тӗлеле хӑшпӗр чухӑнсемпе вӑтамсем те хӑйсен ачисене шкула йама пуҫланӑ, анчах нумайӗшӗсем шкултан вӗренсе тухмасӑрах пӑрахнӑ. Акӑ 1851—1888 ҫулсенче (37 ҫул хушшинче) Шемшерти шкулта 590 арҫын ача, 45 хӗрача вӗреннӗ пулнӑ, вӗренсе тухнисем 132 арҫын ача та 1 хӗрача кӑна пулнӑ, ыттисем пурте пӑрахнӑ. Малала та ҫавнашкалах пулса пынӑ. Шкул вӗренӳ ҫулне ҫителӗклӗ йышпах пуҫланӑ, ҫур хӗле ҫитнӗ ҫӗре виҫӗ пайӗнчен пӗр пайӗ шкула ҫӳреме чарӑннӑ.

1893—94-мӗш вӗренӳ ҫулӗ хӑй майӗпе пынӑ, анчах Шемшере темскерле Самсоновсем (упӑшкипе арӑмӗ) учителе килни вулӑс старшинине питӗ килӗшмен. Февралӗн 22-мӗшӗнче старшина учителсене кантура чӗнсе илнӗ те Шемшерти шкула хупса лартасси ҫинчен пӗлтернӗ. Учителсем (пурте мар) пӑшӑрханса ӳкнӗ. Акӑ мӗн ҫырса хӑварнӑ Самсонов учител шкул летописӗ ҫине:

„...21 февраля 1894 года в Акулевское волостное правление поступило отношение земский управы о закрытии с 22 февраля Акулевского училища. Поводом и этому послужило ничем необ'яснимая антипатия волостного начальства к новым преподавателям...

...Очень жаль, что на пути развития к лучшему, что замечается во всех училищах, становятся такие препятствия, как волостной старшина; а тем более это грустно тогда, когда господин старшина представляет из себя лицо, стоящее по уровню своего умственного развития несравненно выше других гг. старшин, и изображающего (как бы не ошибиться в определении) по внешности тип чисторусского старшины, как бы рожденного для старшинства...“

Паллах, кунта учителӗн старшинана татах та хайартарах хак парас кӑмӑл пулнӑ пулӗ, анчах „старшинашӑн ҫуралнӑ“ старшинаран хӑранӑ пулмала. Ҫавӑнтан хайартарах ҫырнӑ пулсан, Самсоновсен ӑраскалӑхӗ тӗрмере пулмасӑр иртмесчӗ ӗнтӗ. Вара ҫав учителсем Шемшертен тухса кайсанах, шкула Сӗнтӗрвӑрри вырӑс мешчанне, „тӑрӑшнӑшӑн кӗмӗл медаљ илнӗ“ Дубов учителе чӗнсе илнӗ. Самсоновсем тухса кайсанах вӗренекен ачасен йышӗ сасартӑках чакнӑ. Самсоновсем вӗрентнӗ чухне 200 ача вӗреннӗ пулсан, кайран 150—160 ачаран иртмен. 1907—08-мӗш вӗренӳ ҫулӗ тӗлнеле кӑна вӗренекен ачасен йышӗ ӳсме пуҫланӑ.

Ҫав вӗренӳ ҫулӳ пуҫланнӑ тӗле Шемшере ҫӗнӗ учител Анатолий Николайевич Тогайев (хаљ вӑл Маклашкинри колхоз хорне йертсе пырать, композитор) килнӗ, вара земски училишчӑран Ҫутӗҫ министерстви аллинчи двуклаcнӑй шкул туса хунӑ. Анатолий Николайевич шкул пурнӑҫӗнче чылай улшӑнусем тунӑ. Вӑл шкул тавра искусствӑпа интересленекен ҫынсене организацилеме пуҫланӑ. Йанварӗн 3-мӗшӗнче Шемшерти шкулта пирвайхи хут концерт панӑ, концерта йертсе пыраканӗ Тогайев хӑй пулнӑ, Павел Михайлов учител пуҫласа чӑваш чӗлхипе статйа вуласа панӑ. Анчах концертри йурӑсем те, статйи те тӗн ҫинчен кӑна пулнӑ, мӗншӗн тесен концерт тума „ҫӳлти началљствӑсенчен ирӗк илнӗ“.

1911—12 ҫулсенче империалисӑмлӑ вӑрҫӑн шӑршийӗ йала та ҫите пуҫланӑ. Кам пӗлет, тен, йунлӑ Микулай патша Англи тата Франци империалисӗсемпе пӗрле питӗ хӑвӑрт вӑйланса пыракан Германи империалисӑмне хирӗҫ вӑрҫӑпа тухма хатӗрленес шутпах пулӗ Шемшерти шкулта „Потешнӑй ротӑ“ (йунлӑ Микулай патша ывӑлӗн йачӗпе тунӑ ҫар ӗҫне вӗрентекен организаци) организациленӗ. Йунлӑ Микулай патша, Дарданелл проливне ӑмсанса пулас, йунлӑ вӑрҫӑ валљли „шанчӑклӑ салтаксем“ хатӗрленӗ. Шкул ачисене йатарласах ҫар стройне вӗрентнӗ“, вӗсене вӗрентме запасри унтер-офицера лартнӑ. 1912 ҫулта йунлӑ Микулай патша шкулсенчи „потешнӑй ротӑсен“ смотрне туса иртернӗ. Ҫав смотра Хусан губернинчи ытти шкулсенчи „ротӑсемпе“ пӗрле Шемшерти шкултан 9 ача Санкт-Петербурга (хаљхи Ленинграда) кайнӑ. Патша малтанах тупӑ ҫимӗҫӗ хатӗрлесе пынӑ иккен.

* * *

1916—17 вӗренӳ ҫулӗ Шемшерти шкулта та нихӑҫан маммала мар, пысӑк улшӑнупа пулса иртнӗ Патшана вырӑнтан сирпӗтсе антарнӑ хыпар йала ҫитсенех, аслӑ класенче вӗренекен ачасем коридорта ҫакӑнса тӑракан ылтӑн рамкӑ ӑшне хупнӑ патшапа майри портречӗсене туртса антарса пупсемпе учителсем умӗнчех ҫӗре пӑрахса таптанӑ.

1918—19 ҫулсенче Шемшерте II сыпӑклӑ шкул уҫаҫҫӗ. Ҫав ҫулсенче Шемшере „миравай судйе“ Федор Павлович Павлов (хаљ вилнӗ, чӑвашсен композиторӗ) килнӗ. Шкулта учителсем „Авлану“, Фон-Физинӑн „Ҫитӗнейменскер“, Островскин „Бедность не порок“, „Не так живи, как хочется“ т. ыт. пйесӑсемпе спектаклљсем лартаҫҫӗ. Халӑх шкултан татӑлма пӗлмест. Кашни кун кантурта докладсем пулаҫҫӗ, ҫав событисем шкул ачисен ӑс-тӑнӗнче улшӑну тума ҫул уҫса панӑ. Шкул ачисем пуҫарнипех (аслӑ классенче вӗренекенсем) Шемшерте комсомол волкомӗ организацилеҫҫӗ...

... Унтанпа чылай вӑхӑт иртрӗ. Октйаберти социалисӑмлӑ революци кӑна шкул пурнӑҫне аслӑ ҫул ҫине кӑларчӗ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе Шемшерти шкул социалисӑм строителстви валљли пайтах кадрсем хатӗрлеме пулӑшрӗ. Шемшерти шкултан вӗренсе тухнисенчен халӗ тӗрлӗ инженерсемпе техниксем, педагогсем, врачсем, артиссем, мухтавлӑ чекиссем, лайӑх хоҙайственниксем пайтах. 87 ҫул ӗлӗк, шкула пирвай уҫсан, вӗренекенсем 7—8 ачаран ытла пулман пулсан (вӗсенчен виҫҫӗшӗ-тӑватӑшӗ пуп тавращӗсен ачисем пулнӑ), халӗ Шемшерти туллимар вӑтам шкулта 237 ача вӗренет, вӗсенчен ҫуррине йахӑн хӗрачасем, учителсем пурте чӑваш, совет шкулӗнчен вӗренсе тухнӑскерсем. Акӑ Ксенийа Матвейевна Сарра учителница Вӑл хӑй Шемшерти шкултан вӗренсе тухнӑ, халӗ ӗнтӗ вӑл ҫак шкулта хӑй вӗрентет.

Аслӑ Сталин самани колхозниксен ачисене лайӑх вӗренме пур условисене те туса пачӗ. Сталинла Конституци кашнинех вӗренӳ прави парса ҫирӗплетрӗ. К. Н.

Йапонцăсен Китайри тискерлĕхĕ

Йапони империалисĕсем, хăйсен ĕçĕсем ăнăçлă пулманнишĕн тарăхса шăртланса кайса, мирлĕ пурăнакан граждансене варвăрла пĕтерсе тăкас тата Китай хулисене çĕмĕрсе пĕтерес ĕçе çĕнĕрен тума тытăннă. Февралĕн 26-мĕшпе 27-мĕшĕнче Йапони авиацийĕ пĕр вăхăтрах Китайăн тăватă провинцинчи—Фуцзйан, Цзйанси, Хенаҥ тата Шаҥси провинцийĕсенчи вуншар хуласем çине пырса тапăннă. Фуцзйан провинцинчи хуласем çине уйрăмах тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Йапони самоҙочĕсем Кантон çине икĕ хутчен тапăннă. Пĕрехинче Йапони ҙотчикĕсем хула урамĕсем çине пулеметсенчен пенĕ. Нумай çынсем вилнĕ.

Йапонин пĕр самоҙочĕ, Кантон çине пырса тапăннă чух, китайцăсем ăна персе антарнă.

(ТАСС).

Парижре фашисăма хирĕçле митингсем тума чарса лартнă

ПАРИЖ, февралĕн 26-мĕш. Шалти ĕçсен министрĕ Сарро, Германи рейхстагне вут тĕртнĕ кун майĕпе Теҙмана сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет организацилекен митингсене туса ирттерме чарса лартнă.

Митингра тухса калаçмалла пулнă нумай ораторсем те правителствăн çак ĕçне хирĕç йышăннă протест çине алă пуснă.

Парламентри Коммунисла фракцин секретарĕ Дюкло парламентри сулахай группăсен делегацин генераҙнăй секретарĕ патне çыру йанă. Вăл çырура ку ыйтува делегатсен пайанхи пухăвĕн кун йĕркине лартма ыйтнă.

Париж районĕнчи профсойузсен пĕрлешĕвĕ те фашисăма хирĕçле митингсене тума чарнине хирĕç протест тăвать. Çапла чарса лартнине профсойузсен протестĕнче: „ку „сăмах ирĕклĕхĕ“ çине алă çĕкленни пулнă, халăх фронтне тӳрĕ пулма панă присягăпа килĕшӳсĕр йапала, ăна тӳсме тăма çук“, тесе хаклать.

Профсойузсем халăх фрончĕпе çыхăнса тăракан организацисенчен, халăх фрончĕн позицийĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе тăтăклă мерăсем йышăнма, „мирлĕ пурнăçа паттăррăн сыхлама“ ыйтнă. „Вăрçă чĕртекенсен умĕнче кайала чакса ăна хăрушлăх умне тăратмала мар“, тет.

(ТАСС).

Троцкиссен ĕçĕсем арканнă

Сычуаҥри провинцилĕ правителствăпа çар командованийĕн составĕнче улшăнусем пулнă май, Сычуаҥри генералсем хушшинче оппозици тухса кайнă. Китай троцкисĕсем çав лару-тарупа хăйсен провокацилĕ ĕçĕсене тăвас тĕлĕшпе усă курма хăтланнă. Вĕсем Сычуаҥри влаçсемпе Китайăн тĕп правителстви хушшинчи лару-тăрува пур майпа та начарлатма хăтланнă.

Китай хаçачĕсем троцкиссен провокацийĕ йăлтах арканни çинчен пĕлтереççĕ. Троцкиссем тĕп правителствăпа Сычуаҥри влаçсем хушшинче нимĕнле хирĕçӳсем те тума пултарайман.

(ТАСС).

Австри гитлеровцисен хĕçпăшаллă выступленийĕ

Штирире (Австрин кăнтăр пайĕнчи провинцисенчен пĕри) гитлеровцăсем правителствăна хирĕçле выступлнисем туса пыраççĕ. Штири провинцийĕн тĕп хулинче—Грацре шалти ĕçсен министрĕ тата Австри правителствинчи Гитлер ставленникĕ Зейсс-Инкварт сăмах тухса каламала пулнă. Çавăн май гитлеровцăсем Грац хули çине поход тума хатĕрленĕ, вăл походра фашисла организацин членĕсем 60 пин çын хутшăнмала пулнă.

Австри правителстви, пăлхав пуласрăн сыхланса Штирине çарсем самоҙотсемпе тата танксем йанă. Адмонте йатлă хулара гитлеровцăсен отрйачĕсемпе çарсем хушшинче пысăк çапăçусемех пулса иртнĕ.

Йулашки хыпарсем тăрăх, Штирине çĕнрен правителствă çарĕсем йанă.

Гитлеровцăсем выступленисем тунă пирки Венăри рабочисен районĕсенче фашиссене хирĕçле комитетсем организацилен.

(ТАСС).

Хĕрлĕ столицăри пропагандиссемпе агитаторсем колхозсене пулăшаççĕ

Февралĕн 27—28-мĕшсенче Мускав облăçĕнчи колхозсене агитаторсемпе пропагандиссем 2.675 çын тухса кайнă. Вĕсене партин столицăри райкомĕсем массăлă-политикăлă ĕçсем тума йанă.

Унта йанă йулташсем колхозсенче 1938 çулта тумали йалхуçалăх ĕçĕсен планĕпе çураки задачисем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен калаçусем ирттереççĕ, докладсем туса параççĕ, „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕрентес, ăна ăнлантарса парас ĕçе организацилеççĕ.

(ТАСС).

МУРМАНСК, 1-III 38 ç.

ПСК(б)П Тĕпкомне, Сталин йулташа

Партипе правителствă Геройсене—папанинцăсене кусса çӳрекен „Çурçĕр поҙусĕ“ станцин пăрĕ çинчен илсе тухма панă заданине пурнăçа кĕртсе, „Таймыр“ тата „Мурман“ карапсен екипажĕ, Мурманска таврăнса, Сире, халăхсен хаклă çулпуçне, боҙшевикла хĕрӳлĕ салам йарать. Партипе правителствă панă кирек мĕнле заданине те чыслăн пурнăçа кĕртме хатĕрри çинчен карапсен команди Сире шантарать.

Сывă пултăр пирĕн тăван боҙшевиксен Коммунисла партийĕ!

„Таймырпа“ „Мурман“ карапсен личнăй составĕ хушнипе—

Барсуков Котцов
Умовский, Пухов.

Çĕнĕ кадрсем ответлă вырăнсенче

ИШЛЕЙ. Районра йулашки вăхăтра çĕнĕрен ӳсекен кадрсене чылайĕшне ответлă вырăнсене лартнă. Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз районра лайăх ĕçлекен колхозсенчĕн пĕри шутланать. Ку колхозра нумай çул хушши Гури Херсонов коммунис колхоз председателĕ пулса ĕçлерĕ. Халĕ Херсонов йулташ райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет.

Çавăн пекӗх Çĕнйал Покровски йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Илбадоркин йулташа районри çулйĕр пайĕн пуçлăхне лартрĕç. М. П. Пушкин ПСÇЛКС райкомĕн штатлă пропагандисĕ пулса ĕçлекенскер, халĕ ПСÇЛКС райкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Ишлейри вăтам шкулти Н. Дмитрийев учителе райсутĕçпайĕн пуçлăхне лартрĕç.

Гер. Шчербаков.

Курортсем санаторисем

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен сойузĕн Обкомĕ иртнĕ 1937 çулта пĕтĕмпе 1.947 çынна—учителсемпе студентсене курортсемпе санаторисене тата канмали çуртсене йанă. Путовкăсене 80 процент ытла учителсене йанă. 1937 çулта инçетри курортсене 140 çын кайнă, санаторисене—137, канмали çуртсене—702, ачасен санаторине—10, канмали кун базине—563, пионерсен лагерĕсене—20, екскурçисене—375 çын кайнă.

1938 çулта пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен сойузĕн Обкомĕ пĕтĕмпе 4 433 путовкă илме палăртнă. Вĕсенчен: инçетри курортсене йама 165 путовкă, санаторисене—200, канмали çуртсене—900, ачасен санаторине—25, канмали кун базине—2018, пионерсен лагерĕсене—55, республикă тулашĕнчи екскурçисене—520 тата хамăр республикăри екскурçисене кайма—560 путовкă илме палăртнă.

Ленинпа Сталин çинчен хывнă чăвашла сăвă-йурăсен кĕнеки

Йулашки вăхăтра пирĕн чăваш поечĕсем социалисăмла революцин генийĕсем çинчен—Ленинпа Сталин çинчен нумай сăвă-йурăсем çырчĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене композиторсем нотăсем çине хывнă. Хорсем вĕсене пысăк хаваспа йурлаççĕ. Чăваш халăх творчествинче те Ленинпа Сталин çинчен çырнисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ленинпа Сталин çинчен çырнă паллăрах сăвă йурăсене пухса уйрăм кĕнеке пичетлесе кăларасси—халиччен пирĕн умра тăракан ĕç пулнă.

Ку ĕçе пурнăçа кĕтес шутпа, çак кунсенче Чăвашсен Государствă Издателстви „Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсемпе йурăсем“ йатлă уйрăм кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекере пурĕ 24 сăвă-йурă. Вĕсем хушшинче: чăваш халăхĕ Сталин патне йанă сăвăлă çыру, чăваш поечĕсем—С. Елкер, Н. Шелепи, Н. Йанкас, Уйăп Мишши, Ив. Ивник тата ыттисем—Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсем тата Ленинпа Сталин çинчен хывнă чăваш халăх йуррисем.

Кĕнеке хыт хуплашкалă. 98 страницă. Хакĕ—2 тенкĕ те 25 пус. Анчах тиражĕ пĕчĕккĕ вара—пурĕ те 4000 екземпҙар кăна.

Йехрем Иванĕ.

200—300 процентшер тултараççĕ

ШĂХАСАН. Йамашри „Стахановец“ промертелти Артемийев, Никитин, Петров, Моисейев йулташсем йулашки вăхăтра кулленхи нормăсене 200—300 процентшер тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Викторов йулташ та кашни куллен 11 чăпта çапас вырăнне 15—16 чăпта çапса кăларать.

Ертел членĕсем пур ĕçре те тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах правлени вĕсемпе куллен ĕçлесе пырассине маннă. Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ правлени председателĕ çук тесе пухусем тумаççĕ. Куҙтмассăла ĕç сӳнсе ларнă. Хаçат-журналсем вуласси́не, калаçусем туса ирттерессине йĕркелемен. Куҙтработник Афанасйев ертел укçипе илнĕ 700 тенкĕ тăракан хуткупăса йурăхсăра кăларчĕ.

Вăхăтлăха правлени председателĕ пулса ĕçлекен Данилов çак ирсĕрлĕхсене курать пулин те, ĕçе йĕркелессишĕн тăрăшмасть.

Ал. Иванов.

„Медик“ спорт обшчествин ăмăртувĕ

Мартăн I-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи „Медик“ спорт обшчествин йĕлтĕрçĕсен ăмăртувĕ пулса иртрĕ.

Ăмăртува 23 çын, 4 командă (аптекă, боҙницă, акушерсен шкулĕ, ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлакан институт) хутшăнчĕç.

20 километра чупса тухмали арçынсен ăмăртувĕнче I-мĕш вырăна Туманов йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 1 сехет те 4 минут та 30 секундă. 2-мĕш вырăна Данилов тухрĕ (1 сехет те 52 минут).

10 километр хушăна чи малтан Йермолайев чупса тухрĕ (55 минут та 50 секундă), 2-мĕш вырăна Соколов йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 56 минут та 30 секундă.

3 километр чупмали хĕрарăмсен ăмăртувĕнче Моторина тата Горохăва малти вырăна йышăнчĕç.

Çавăн пекӗх тата ăмăртува хутшăннă аслă врач Кузнецов йулташ пултарулăхĕ çинчен палартса хăвармала. Вăл 40 çулта пулин те 20 километр хушăна I сехет те 12 минутра чупса тухрĕ.

А. Нестеров.

ПАХЧА-ÇИМĔÇ ВĂРЛĂХĔСЕН ЛАВКИ

ÇĔРПӲ. Районри çуртлă вăрлăх базин вăрлăхсем сутмали лавка уçрĕ. Лавкара—чĕкĕнтĕр, çарăк, хăйар, кишĕр т. ыт. тĕрлĕ вăрлăхсем сутаççĕ. Колхозсемпе колхозниксем çуртлă вăрлăхсене нумай илеççĕ.

Н. О.

Йапонин çĕнĕ провокацийĕсем

Йапонири хаçатсем йăлтах суйа хыпарсем шухăшласа кăларса параççĕ. Вăл хыпарсем тăрăх, февралĕн 26-мĕшпе 27-мĕшĕнче Манжури чикки урлă совет отрйачĕсем каçса кĕнĕ пулать, икĕ совет самоҙочĕ вĕçсе каçнă пулать. ТАСС-а çак хыпарсем йăлтах тĕрĕс марри çинчен пĕлтерме хушнă. Февралĕн 26-мĕшпе 27-мĕшĕнче чикĕре унашкал нимĕнле фактăсем те пулман. Йăлтах урăхла, февралĕн 26-мĕшпе 27 мĕшĕнче Йапони самоҙочĕсем совет территорийĕ çине вĕçсе каçса çӳрени виçĕ хутчен те пулнă. Йапонин пĕр самоҙочĕ совет территорийĕ тĕлĕпе вĕçсе 4 километр, тепри 8 километр шалала, пирĕн çĕр çинеле кĕнĕ. Совет самоҙочĕсем-истребителсем вĕçсе çĕкленнине курсассăн, Йапони самоҙочĕсем васкавлăн Манчжури территорийĕ çинеле вĕçсе кайнă.

(ТАСС).

ТЕМТЕПĔР

ГРУЗИРИ ӲСЕН-ТĂРАНСЕН КАРТТИ

Тбилисири ботаникă институчĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки ваҙҙи, институт туса ирттернĕ 14 аслăлăхлă експедицин материалĕсем тăрăх, Грузири ӳсен-тăрансен карттине хатĕрлет.

Кунпа пĕрлех Грузире пухнă уй-хирте ӳсекен техникăлла ӳсен-тăрансен, улма-çырла йăвăçĕсен, утă куракĕсен 70 йахăн експонатне выставкăнайама хатĕрлеççĕ.

(„Заря Востока“).

СЦЕНА ÇИНЧЕ ХĔРĔХ ÇУЛ

Февралĕн 16-мĕшĕнче Хусанти драмăлă пысăк театр Дмитрий Рафаилович Лҙубин артист сценă çинче хĕрĕх çул ĕçленине уйавласа ирттернĕ. Лҙубин йулташ 1880 çулта çуралнă. Вăл хĕрĕх çул хушшинче 20 çул совет театрĕн сцени çинче ĕçлет. Уйав кун Лҙубин йулташа чыслаçа Совет Сойузĕнчи нумай хуласенчен саламлă телеграммăсем килнĕ.

(„Красная Татария“).

„СКУРИ“ ТЕКЕН МИНЕРАЛЛА ШЫВСЕМ

Цаленджихск районĕнче Скури йалĕнче авалĕçлĕ шывсем ушкăнне кĕрекен минераллă çăлкуçĕ пур.

Скури шывĕ вар-хырăм чирĕсенчен, сывламали çулсен катаррĕнчен, ревматисăмран сывалма лайăх пулăшать.

Ку вăхăтчен çак çăлкуçĕпе кирлĕ таран усă курман. Иртнĕ çулта пĕтĕмпе те 362 гектолитр çеç илнĕ.

Кăçалхи çул Скури йалĕнче шыва савăт-сапасем çине тултармалли çурт тата склад тăваççĕ. Минераллă шыва вырăнтах газлантарса, уйрăм бутылкăсем çине йарса Совет Сойузĕн тĕрлĕ хулисене йама пуçлаççĕ.

(„Заря Востока“).

Телейлĕ çемйесем

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуç йалсоветĕнчи „Çĕнĕ хунав“ колхоз членĕсем—М. Йегоров, П. Абрамов семйисем ĕлĕк чухăн пулнă пирки нушаланса кăна пурăннă. Халь вĕсен семйисенче 10-шар çын. Вĕсем пуйан та куҙтурлă пурăнаççĕ. Кăçал 350—400 шер пăт тырă ĕçлесе илнĕ.

Ку семйесем нумай ачалă пирки государствăран 2-шер пин тенкĕ укçа илеççĕ. Вăл укçапа вĕсем хăйсен ачисене тумтирсем тата вĕренмели хатĕрсем туйанса панă. Кунсăр пуçне тĕрлĕ хаçат-журналсем çыранса илнĕ.

Б. Абрикосов.

ФОТО КРУЖОКĔ

ÇĔРПӲ. Феҙдшерсен шкулĕнче фото кружокĕ ĕçлет. Унта 20 студент вĕренет. Кружок заҥатисем туса ирттерет, уйăхра пĕрре „Фото-газета“ кăларса тăрать. Кружок ваҙҙи дирекци пур условисем те туса панă. Халь студентсем фотоӳкерчĕксене аванах кăларакан пулчĕç.

К. Михайлов.

ХУР ФЕРМИ

ВĂРМАР. Пĕрремĕш-Туçари „Çĕнĕ“ колхозăн хур фермийĕ çулран çулах ӳссе пырать. Стахановкă А. Матвейева йулташ пăхса усракан хурсем февралĕн 8-мĕшĕнче çăмарта тума пуçларĕç. Фермă пуçлăхĕ Т. Значков йулташ çулсеренех хурсен йышне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлет.

Кăçал вăл фермă пуçлăхĕсен районри канашлувĕнче патшалăха 2000 пуç хур ӳстерсе пама обйазателствă илчĕ.

В. Йефимов.

ВĔРЕНСЕ ТУХРĔÇ

ЙЕТĔРНЕ. Февралĕн 19-мĕшĕнче Анат Сăнарти „Çĕнĕ çул“ колхозра хутла сахал пĕлекен 12 колхозницă вĕренсе тухрĕç. Вĕсем пĕтĕмпе 5 уйăх хушши вĕренчĕç.

С. Важоров.

СУД

Ачана вĕлерекенсем

ТРАК. Йӳçкасси йалĕнчи Дмитрий Фадейевăн 1930 çулта арăмĕ вилнĕ. Арăмĕнчен унăн Митри йатлă 5 çулхи ача йулнă. Арăмĕ вилсенех Фадейев хăйсен йалĕнчен Марфа Варлампийевана качча илнĕ. Анчах та иккĕмĕш арăмĕпе Фадейев нумайах пурăнайман, вăл вилсе кайнă.

Упăшки вилсен, Марфа, Константин Петрова хăй патне киле кĕртнĕ. Петров Митрине йуратман, ăна вĕлересшĕн пулнă. Çапла вара упăшки хĕтĕртнипе Марфа Варлампейева йанварĕн 5-мĕшĕнче каçхине 7 çулхи Митрийа краçын сапса çунтарса йанă.

Февралĕн 16-мĕшĕнче çак ĕçе Трак районĕнчи халăх сучĕ пăхса тухрĕ. Тискер ĕç туса ачана вĕлернĕшĕн Константин Петрова Уголовлă Кодексăн 17—136 статйисем тăрăх 10 çул хушши хупса усрамала приговор йышăнчĕ. Арăмне, йăвăр çын пирки, халĕ нимĕн те тумарĕç.

Н. Петров.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IX Çеççийĕ

пайан мартăн 4-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Хресчен Çуртĕнче уçăлать.

Чăваш АССР Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Парти группи ларăвĕ çавăнтах кăнтăрла иртсен 5 сехетре пулать.

„Йелчĕк райĕçтăвкомне тăшмансем кĕрсе ларнă“ статйа çинчен

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн 1937 çулхи октабĕрĕн 3-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче „Йелчĕк райĕçтăвкомне тăшмансем кĕрсе ларнă“ статйа пичетленсе тухнăччĕ. Статйара кăтартнă фактсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, Йелчĕк райĕçтăвкомĕн 1938 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче пулнă пленум ларăвĕ çапла йышăннă:

„1. „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра 1937 çулхи октабĕрĕн 3-мĕшĕнче тухнă „Йелчĕк райĕçтăвкомне тăшмансем кĕрсе ларнă“ йатлă статйара авторсем райçĕрĕçпайĕн пуçлăхĕ пулнă Гаврилов, аслă зоотехник пулнă Артушин пирки фактсене тĕрĕс çутатса панă, анчах Патреекелĕнчи туллимар вăтам шкул директорне, райĕçтăвком членне А. Й. Пушкова халăх тăшманĕсен шутне кĕртсе айăплани тĕрĕс мар. Пушков нихăçан та кулак пулман. Ун ĕçĕнче йăнăшсем пулнă.

2. А. Й. Пушков йулташа райĕçтăвком членĕн прависене çĕнĕрен парас. Райĕçтăвком президиумĕ 1937 çулхи октабĕрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă решени те, пленум 1937 çулхи октабĕрĕн 30-мĕшĕнче йышăннă решени те тĕрĕс пулман тесе йышăнас. Пушков йулташа райĕçтăвком членĕсен составĕнчен кăларса политикăлла йăнăш тунă тесе шутлас. Тĕрĕс мар айăплани çинчен çырса кăларма „Чăваш Коммунĕ“ редакцине пĕлтерес.

„Чăваш Коммунĕ“ çинче 1937 çулхи декабĕрĕн 3-мĕшĕнче пичетленсе тухнă заметкăра райсутĕçпай пуçлăхĕ Игнатйев йулташ çинчен çырнисем тĕрĕссипе тĕрĕс маррине тĕплĕн тĕрĕслесе пăхма райĕçтăвком президиумне хушас“.

Районри библиотекă

ЕЛĔК. Районри библиотекăна 1935 çулта организациленĕ. Вăл Елĕк районĕнче чи кăтартулă библиотекă пулса тăмала. Анчах та ĕç пачах урăхла пулса пырать. Вулакансене хăй йенне кунран кун нумайрах та нумайрах çавăрса пырас вырăнне, библиотекă вĕсен хисепне сахалатса пычĕ. Ку вăл библиотекă çурчĕ пĕчĕккинчен тата унта ĕçлеме райсутĕç пайĕ сахал пĕлӳлĕ кадрсем тупса лартнинчен килнĕ.

Елĕк райсутĕç пайĕ библиотекă ваҙҙи çирĕп работниксем суйласа илесси çине ку таранччен хакламасăр пăхнă, унта работниксем йаланах улшăнса тăнă.

Акă Константинов йулташ библиотекăра заведуйушчи пулса пурăннă вăхăтра йаланах ĕçкĕсенче çӳренĕ. Вăл библиотекă ĕçне çулталăкĕпех йухăнтарса пынă, анчах ăна çак кунсенче çеç райсутĕç пайĕ ĕçрен хăтарнă.

Библиотекăн вулав пӳлĕмне 10—15 çын çеç вырнаçма пултарать, ыттисен ирĕксĕрех библиотекăран тухса кайма тивет. Çавăнпа та библиотекăна вулама пыракансен хисепĕ çулран çул чакса пынă: 1936 çулта 3.000 çын пулнă пулсан, 1937 çулта 2.700 çын çеç йулнă.

Пайанхи кун вулакансен йышĕ библиотекăра 3.500 çын. Халҙхи вăхăтра библиотекăра 7.500 кĕнеке шутланать, тата 1938 çулта çĕнĕ кĕнекесем илме 13.000 тенкĕ укçа палăртса хунă.

Çапах та библиотекăн халҙхи заведуйушчийĕ Розанова йулташ пĕччен тăрăшнипех ĕç çителĕклĕ пулса пырас çук. Çавăнпа та районри библиотекăна Елĕк райсутĕç пайĕн лайăхрах çурт тупса памала, ĕçлеме пултаракан кадрсем парса пулăшмала.

Арк. Нестеров.
В. Йефремов.

1400 кубла метр хатĕрленĕ

ТРАК. Мартынкассинчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“ колхоз стахаҥовла уйăхлăхри вăрман касса турттарас плана ытлашшипех тултарчĕ. Унăн план тăрăх 700-шер кубла метр касса турттармала пулнă пулсан, вăл ăна февралĕн 24 мĕшĕнчех тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче уйрăмах 2 мĕш бригадăн бригадирĕ Т. Андрианов аван ĕçлерĕ.

И. Сергейев.

Положенине вĕренеççĕ

ТРАК. Кушар Йунтапа йалĕнче суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе кашни 10 кил пуçне 2 агитатор ĕçлет. Агитаторсем „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕрентнĕ чухне вырăнти примерсене илсе ăнлантараççĕ. Кунта суйлав Положенине вĕренессине йĕркеленипе пĕрлех хутла пĕлменнисене те вĕрентме тытăннă. Унта 41 çын йавăçтарнă.

Т. Карпов.

Хупă тăрать

ИШЛЕЙ. Чантăрти вулав çурчĕ часчасах хупă ларать. Кружоксем ĕçлемеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Ленин, Сталин произведенийĕсемпе илемлĕ литературăсем ытларах вуласшăн, анчах вăл кĕнекесем вулав çурчĕн библиотекинче çителĕксĕр. Кунта туллимар вăтам шкул ĕçлет, учителсем чылай. Апла пулин те „РСФСР Верховнăй Советне суйламалли Положенине“ вĕренессине организацилемен-ха.

Хачăкри вулав çурчĕн пуçлăхĕ те колхозниксем хушшинче куҙтмассăлă ĕçе çителĕклĕ сарса йамасть. Вулав çуртĕнче çĕнĕ кĕнекесем çук. Мускаринкассинчи аласталăх ертелĕнчи библиотекă темиçе уйăх ĕнтĕ хупă ларать. Тарăнçырмари вулав çурчĕ аван ĕçлет. „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕренессипе вулав çурчĕ çумĕнче кружоксем ĕçлеççĕ. Суйлав Положенине вĕренесипе кашни бригадăнах комсомолец—агитаторсене çирĕплетнĕ. Вулав çурчĕ çумĕнчи драмкружок та йĕркелĕ ĕçлет, кашни уйăхрах икшер хут спектакҙ лартаççĕ. Анчах вулав çуртĕнче колхозниксене вулама илемлĕ литературăсем çителĕклĕ мар.

Гер. Шчербаков.

РЕДАКЦИРЕН

„Чăваш Коммунĕ“ („Канаш“) хаçатăн 1937 ç. ийунĕн 29-мĕшĕнче „Йалавин ваҙҙи Совет писателĕсен ретĕнче вырăн çук“ йатлă статйара тата сентабĕрĕн 17-мĕшĕнче пичетленнĕ „Буржуалă националиссемпе вĕсен агенчĕсем“ йатлă статйара С. Йалавин писател çинчен, елеклесе çырнă пулнă, ăна ним айăпсăрах троцкисла буржуалă националисла елементсемпе вĕсен агенчĕсен шутне кĕртме тăрăшнă. Тĕрĕслесе тухнă документсем тăрăх С. Йалавин вĕсен агенчĕ пулма мар, халĕ тăрă шыв çине кăларнă халăх тăшманĕсене хирĕç темиçе çул хушши кĕрешнĕ, çавăншăн ăна халăх тăшманĕсем елекленĕ те.

Хроника

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Георгий Леонтйевич Поҙаков йулташа Чăваш АССР Шалти суту-иҙу халăх комиссарĕн заместителне лартнă.

ИЗВЕЩЕНИЕ

4-го марта, в 6 часов вечера, в доме Партпроса состоится инструктивный доклад к Международному Коммунистическому Женскому дню 8 марта.

Явка для докладчиков и агитаторов обязательна.

ГОРКОМ ВКП(б),
ДОМ ПАРТПРОСА.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„Спотара“ Чăваш кантурне
Бухгалтер-ревизор
кирлĕ.

„Спотара“ Йĕпреçри хăма çуракан заводне
технически директор,
вăрман касса ĕçленĕ çĕрте йĕртсе пыма аслă маçтăр,
хăма çурнă çĕрте аслă маçтăр,
аслă бухгалтер заместителĕ,
бухгалтер кирлĕ.
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Çак адреспе пымала: Шупашкар, Красноармейскайа № 5. „Спотара“ Чăваш кантурĕ.

Водопйанăв йачĕпе тăракан
Шупашкарти тир-сăран завочĕн кантурне
СТАТИСТИК
ĕç тухăçлăхне учота илсе пыракан
кирлĕ.

Çак адреспе пымала: Шупашкар хули, Ворошилов урамĕ, 27.

Кăçалхи февралĕн 14-мĕшĕнче, çĕрле Елĕк йалĕнчен, кăкарса тăратнă çĕртен

ЛАША ÇУХАЛНĂ.

Айăр, 4 çулта, сутă-турă, çараçунана кӳлнĕ.

Çак адреспе пĕлтермеле: „Красное Сормово“ колхоз, Пиçенер йалсовечĕ, Елĕк р. Чăваш АССР.

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 111 Гор. Чебоксары. Типографи № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 197 Тираж 15.500 25—94 ф. б. 1—1 п. л.

К